ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

1952 çул Январь 22
ЫТЛАРИКУН
№ 17 (8669)
Хакĕ 20 пус.
34-мĕш çул тухать.

Сывă пултăр коммунизм çĕнтерĕвĕ патне илсе пыракан Ленин—Сталин партийĕ!

Сывă пултăр ленинизм!

Ленинизм идейисен çĕнтерĕвĕ

28 çул каялла Коммунистсен партийĕпе Совет государствине тăваканĕ тата гениллĕ руководителĕ, пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен аслă çулпуçĕпе учителĕ Владимир Ильич Ленин чĕри тапма чарăнчĕ.

Аслă Ленин сăнарĕ, унăн вилĕмсĕр идейисем ĕçсынни массисен чĕрисенче, ăнланăвĕнче пурăнассĕ тата ĕмĕр пурăнĕç. Çĕнĕ массăсен, ахаль массăсен, этемлĕхĕн чи аялти сийĕсен çĕнĕ çулпуçĕ В. И. Ленин ĕçсыннисене капитализмла чуралăхран хăтăлмалли çулсемпе майсем, социализмлă ирĕклĕ пурнăç тумалли çулсем кăтартса панă. Ленин ячĕпе пĕтĕм тĕнче историйĕн çĕнĕ самани—капитализм ишĕрĕлсе пыракан тата социализм çĕнтерекен самана уйрăлми таччăн çыхăнса тăрать.

Ленинпа Сталин большевиксен аслă партине, нимрен хăрaман революционерсен партине туса хунă. Çакă парти пирĕн çĕршыври рабочисемпе хресченсене помещиксемпе капиталистсем пуç пулса тăнине пĕтерессишĕн, Советсен влаçне çирĕплетессишĕн, коммунизм тăвассишĕн аслă кĕрешĕве çĕклерĕ.

«Эпир патша йĕркипе буржуази пусмăрласа тăнă ĕçсынни массисен чи аялти сийĕсене ирĕклĕх патне, ирĕклĕ пурнăç патне çĕклерĕмĕр,—тесе çырнă Ленин.—**Эпир совет республики, çĕнĕ сăнарлă государство, чи лайăх буржуаллă тата парламентарлă республикăсенчен те темиçе хут лайăхрах та çўлĕрех демократиллĕ республика туса хурса çирĕплетрĕмĕр. Эпир пролетариат диктатури туса хутăмăр, ăна чи чухăн хресченсем пулăшса пыраççĕ, тата, эпир малтанах тĕплĕ шухăшласа хунă социализмлă улшăнусен системине пурнăçа кĕртме пуçларăмăр. Эпир пĕтĕм тĕнчери миллионшар та миллионшар рабочисем хушшинче хăйсен вăйне ĕненессине вăратрăмăр, хастарлăх кăварне чĕртрĕмĕр».**

Ленин пирĕнтен çамрăк совет республики тĕнчери империализм тапăннине сирсе янă хыççăн социализмăн çĕнĕ çурчĕн никĕсне хывма кăна тытăннă вăхăтра уйрăлса кайрĕ. Пирĕн çĕршывра социализм обществи тăвассишĕн пыракан кĕрешĕве Ленинăн вилĕмсĕр ĕçĕсене малалла туса пыракан гениллĕ Сталин ертсе пыма пуçларĕ.

Аслă траур кунĕсенче ĕмĕр асран кайми Ильич тупăкĕ умĕнче Сталин юлташ партипе совет халăхĕ ячĕпе: большевиксен партийĕн членĕн ятне çўлте тытма тата тасалăхра сыхласа усрама, парти пĕрлĕхне куç шăрçине сыхланă пек сыхласа усрама, пролетариат диктатурине сыхласа усрама тата тĕреклетме, рабочисемпе хресченсен союзне мĕнпур вăйпа тĕреклетсе пыма, пирĕн çĕршыври халăхсен тăванла туслăхне тĕреклетме, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзне тĕреклетме тата аслăлатма, хамăрăн çарпа флота тĕреклетме, пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен союзне тĕреклетме тата аслăлатма пулса тупа турĕ.

Ленин вилнĕ хыççăнхи çулсем партипе совет халăхĕ çак аслă тупана пурнăçлассишĕн паттăррăн кĕрешнĕ палăрпа иртрĕç. Парти умĕнче тулашри ĕçсем енĕпе те, шалти ĕçсем енĕпе те сахал мар йывăрлăхсем пулнă. Тулашри империалистла реакциллĕ вăйсемпе çĕршыври класс тăшманĕсем пире социализм тăвас ĕçре кансĕрлеме хăтланчĕç. Халăхăн чи хаяр тăшманĕсем—троцкистла-бухаринла тата ытти йышши предательсемпе капитулянтсем партие Ленин çулĕ çинчен пăрса яма тăрăшрĕç. Анчах та тăшмансем хăтланнисене пурне те пирĕн халăх, Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе çĕмĕрсе тăкрĕ.

«Эпир, коммунистсем,—уйрăм йышши çынсем,—тенĕ Сталин юлташ. — Эпир уйрăм йышши материалран тунăскерсем. Эпир—аслă пролетариллĕ стратегăн çарĕ, Ленин юлташăн çарĕ пулса тăратпăр. Çав çарта тăрассинчен хисеплĕ урăх нимĕн те çук».

Ленин ялавĕ айĕнче, Сталин юлташ ертсе пынипе совет халăхĕ хăйĕн çулĕ çинчи мĕнпур чăрмавсене пĕтерчĕ, историллĕ кĕске срокра пирĕн çĕршыв техникăпа экономика тĕлĕшĕнчен ĕмĕртен кая юлса пынине пĕтерчĕ, ăна хăватлă, никам çĕнтерейми индустриллĕ-колхозлă социализмлă держава туса хучĕ. Совет халăхĕ социализм кĕрешсе илнĕ аслă тивлетсене империалистла вăрă-хурахсем тапăннинчен хўтĕлесе хăварчĕ, халĕ вăл пирĕн çĕршывра коммунизм тумалли сталинла пысăк программăна пурнăçа кĕртсе пырать.

Социализм пурĕ пĕрех коммунизма куçса кĕмелле, тесе кăтартнă Ленин. Ленин—Сталин партийĕ хавхалантаракан совет çыннисем геройла тăрăшнипе пирĕн çĕршывра социализмран майĕпен коммунизма куçас историллĕ ĕç пулса пырать. Вăрçă хыççăнхи пилĕкçуллăха ăнăçлă тултарнă. Çакă вăл совет обществи коммунизм çулĕ çинче тунă пысăк утăм пулса тăрать. Иртнĕ çул хуçалăхпа культура строительствинче çĕнĕрен чаплă çитĕнўсем тунипе паллă пулчĕ. Капитальнăй строительство ĕçĕсем халиччен пулман пысăк хăвăртлăхсемпе пулса пыраççĕ, коммунизмăн сталинла аслă стройкисене тума тытăннă, çутçанталăка улăштарса çĕнетмелли сталинла план пурнăçа кĕрсе пырать.

Халăх хуçалăхĕ хăватлăн çĕкленнĕ никĕс çинче ĕçсыннисен пурнăçĕ лайăхланса пырать, халăх массисен культури пĕрмай çĕкленет, совет науки, литератури, искусство чечекленеççĕ. Ленин малашлăха витĕр курса каланисем пурнăçа кĕчĕç: социализм наукăпа техникăн, этемлĕх культурин мĕнпур çитĕнĕвĕсене ĕçсыннисемшĕн ĕçлеттермелле турĕ.

Совет Союзĕ тунă пĕтĕм тĕнчипе историллĕ çĕнтерўсем Ленинпа Сталин кăтартса панă çул пĕртен-пĕр тĕрĕс тата этемлĕхĕн пĕтĕм ĕçсыннисем валли ирĕклĕхпе телей патне çитмелли пĕртен-пĕр кĕске çул пулнине никам сирсе ярайми çирĕплетрĕç. Польша, Чехословаки, Румыни, Венгри, Болгари, Албани халăхĕсем шанчăклăн социализм çулĕпе малалла пыраççĕ.

Ленинизм идейисен чаплă çĕнтерĕвне нумай миллионлă Китай халăхĕн историллĕ çĕнтерĕвĕ кăтартса парать. Вăл хăйĕн коммунистла партийĕ ертсе пынипе Китай халăх республикине туса хучĕ, çĕнĕ пурнăç строительствинче кĕске срокра пысăк çитĕнўсем турĕ.

Ленинизм вăл—ĕçсыннисен интернационалла аслă вĕрентĕвĕ пулса тăрать. Унăн çĕнтерўллĕ ялавĕ айне хăйсен вăйне шеллемесĕр кĕрешекен хăюллă паттăрсен çĕнĕ те çĕнĕ отрячĕсем тăраççĕ. Рабочи класăн паттăр авангарчĕ пулса тăракан коммунистла партисем ўссе тĕрекленеççĕ. Колонисемпе пăхăнса тăракан çĕршывсенчи пусмăрти халăхсем хушшинче нациллĕ-ирĕклĕх юхăмĕ вăйланса пырать.

Советсен республикине туса, Ленин çакна кăтартса панă: вăл пĕтĕм тĕнчери социализмпăн империалистла вăрçăсене хирĕç, мирпе халăхсен туслăхĕшĕн кĕрешмелли çула çутатса тăракан факел пулса тăрĕ, тенĕ. Хăйĕн пĕтĕм кун-çулĕнче Совет государстви ленинла-сталинла мир политикине çине тăрса пурнăçласа пынă, вăрçă чĕртекен империалистсене тăрă шыв çине кăларнă, халăхсен ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне хўтĕлесе хăварнă.

Совет государствишĕн агрессиллĕ, захватникла вăрçăсен политики ют. Миршĕн кĕрешесси социализмлă державăн тулашри политикин никĕсĕ пулса тăрать. Мирлĕ ĕçе тытăннă совет çыннисем вăрçă чĕртекен империалистсен каварне тимлĕ асăрхаса тăраççĕ, хăйсен Тăван çĕршывăн хăватне тĕреклетеççĕ.

Совет халăхĕ хăй тунă мĕнпур çитĕнўсемшĕн никам çĕнтерейми ленинла-сталинла вĕрентĕве, коммунистсен партине тата Ленин ĕçне малалла илсе пыракан пирĕн гениллĕ аслă учителĕмĕрпе çулпуçĕмăра Сталин юлташа тивĕçлĕ.

Ленин ялавĕ айĕнче, Сталин юлташ ертсе пынипе Совет Союзĕнчи халăхсем Ленин çулĕпе çирĕппĕн те шанчăклăн коммунизм çĕнтерĕвĕ патне пыраççĕ.

(«ПРАВДА» хаçатăн январĕн 21-мĕшĕнчи умстатья).

В. И. Ленин вилнĕренпе 28 çул тултарнă ятпа Шупашкарта пулса иртнĕ хурлăхлă-чаплă лару

Ĕнер Шупашкарта, Чăваш государство академи театрĕнче, большевиксен партийĕпе Совет государствин организаторĕ, пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен гениллĕ çулпуçĕпе учителĕ Владимир Ильич Ленин вилнĕренпе 28 çул тултарнă ятпа хулари совет, парти, профсоюз тата обществăллă организацисен хурлăхлă-чаплă ларăвĕ пулса иртрĕ.

Президиумра партипе совет организацийĕсен руководителĕсем, обществăллă организацисен представителĕсем, стахановецсем.

Лару председателĕ, ВКП(б) хула комитечĕн секретарĕ Полукаров юлташ, кĕске сăмах каласа, хурлăхлă-чаплă ларăва уçни çинчен пĕлтерет тата Владимир Ильич Ленина хисеплесе ура çине тăма сĕнет. Пурте ура çине тăраççĕ. Хурлăхлă шăплăх.

Лару, тăвăллăн алă çупса, хисеплĕ президиума Сталин юлташ ертсе пыракан ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн Политбюро составне суйларĕ.

28 çул хушши Ленинсăр, Сталин юлташ ертсе пынипе, Ленин çулĕпе пыни çинчен ларура ВКП(б) обкомĕн секретарĕ Ислюков юлташ доклад турĕ.

Лару халăхсен аслă çулпуçĕ Иосиф Виссарионович Сталин юлташ патне саламлă çыру яма йышăнчĕ.

В. И. Ленин вилнĕренпе XXVIII çул тултарни çинчен

Мускавра пулнă хурлăхлă-чаплă ларура П. Н. ПОСПЕЛОВ юлташ тунă доклад

Пирĕнтен Владимир Ильич Ленин, этемлĕхĕн аслă генийĕ, пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен юратнă çулпуçĕ, ăшшĕ тата учителĕ уйрăлса кайнă хурлăхлă кунтанпа 28 çул иртрĕ.

Ленинăн вилĕмсĕр вĕрентĕвĕ,—ăна унăн ĕçне малалла илсе пыракан аслă Сталин юлташ аталантарать,—халĕ ĕçсынни этемлĕхĕн ăсĕпе чĕрисене кĕрсе пырать, этемлĕхе капитализм тăллисенчен хăтăлмалли çула, тĕнчене социализм никĕсĕ çинче çĕнетмелли çула кăтартса парать. Ленинизм—империализмпа пролетариллĕ революцисен саманинчи марксизм,—кашни çул ытларах та ытларах хăйĕн аслă, пурне те çĕнтерекен вăйне çирĕплетсе парать, социализм тата коммунизм тăвакансемшĕн пуриншĕн те, империализма хирĕç, капитализмлă чуралăха хирĕç кĕрешекенсемшĕн пуриншĕн те тĕрĕс компас тата маяк пулса тăрать.

В. И. Ленин вилни пĕр çулталăк тултарнă кун Сталин юлташ çапла çырнă:

«Ильича, хамăр учителе, хамăр çулпуçа асра тытăр, юратăр, вăл кăтартса панисене вĕренĕр. Ильич кăтартса панă пек кĕрешсе, шалти тата тулашри тăшмансене çĕнтерсе пырăр.

Ильич кăтартса панă пек ĕçлесе çĕнĕ пурнăç, çĕнĕ йăла, çĕнĕ культура туса пырăр.

Пĕчĕк ĕçрен нихăçан та ан пăрăнăр, мĕншĕн тесен пĕчĕк ĕçрен питĕ пысăк аслă ĕç пулса пырать; çакă ĕнтĕ Ильичăн паха халалĕсенчен пĕри».

Совет çыннисем, аслă Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе, социализм строительствинче пĕтĕм тĕнчипе историллĕ çĕнтерўсем турĕç, мĕншĕн тесен вĕсем шалти тата тулашри тăшмансене хирĕç кĕрешрĕç, тата çĕнтерчĕç, Ильич хушса хăварнă пек, унăн вилĕмсĕр халалĕпе пырса çĕнĕ пурнăç турĕç.

Коммунистсен партийĕпе совет халăхĕн никам çĕнтерейменлĕхĕн шанăçĕ çакă пулса тăрать: вĕсем пур ĕçе те Ленин хушса хăварнă пек тăваççĕ, вĕсем хăйсен мĕнпур ĕçĕнче Ленин ĕçне малалла илсе пыракан аслă Сталин кăтартăвĕсене пурнăçлаççĕ. **(Нумайччен алă çупаççĕ).**

I. Марксистла çĕнĕ сăнарлă парти—обществăна çĕнетекен аслă вăй

Ленинпа Сталин нумай çулсем хушши çĕнĕ сăнарлă, кивĕ, II-мĕш Интернационалăн реформистла партийĕсенчен тĕпрен уйрăлса тăракан революциллĕ марксистла парти тăвассишĕн оппортунистсене хирĕç кĕрешнĕ, влаçа кĕрешсе илессишĕн пролетариата ертсе пыма пултаракан парти, социализм никĕсĕ çинче тĕнчене çĕнетме пултаракан парти тăвассишĕн кĕрешнĕ.

Çак кунсенче, 1952 çулхи январĕн 18-мĕшĕнче, пирĕн парти пурнăçĕнче паллă событи пулса иртнĕренпе, 1912 çулта Прагăри конференци пулса иртнĕренпе 40 çул тултарчĕ, çак конференци предатель-меньшевиксене рабочи класс партийĕнчен хуса кăларчĕ, большевиксем хăйсене уйрăм парти пуласcине пĕркелерĕ, революциллĕ марксистла çĕнĕ сăнарлă партие, ленинизм партийĕ туса хучĕ.

Пĕрремĕш тĕнче вăрçи пуçлансан II-мĕш Интернационалăн реформистла партийĕсем, оппортунистла лидерсемпе рабочисен юхăмĕнчи буржуази агенчĕсем политика енĕпе пăсса çитернĕскерсем, — тĕнчери рабочисен туслăхĕн ĕçне сутрĕç, «отечествăна хўтĕлес» текен суя лозунгсемпе витĕнсе, тĕрĕссипе вăрă империалистсен киревсĕр, çăратуллă интересĕсемшĕн пырса, империализм вăрçине хўтĕлеме пуçларĕç.

Большевиксен партийĕ, революциллĕ марксистла çĕнĕ сăнарлă парти кăна рабочисен пĕтĕм тĕнчери туслăхĕн ялавне çĕклĕса хăварчĕ, империализм вăрçине хирĕç, империалистла правительствăсене сирпĕтсе антарассишĕн, империализм вăрçинчен революциллĕ майпа тухассишĕн тăчĕ.

Вăрçă çулĕсенче Ленин—Сталин партийĕ Ленин тĕрĕслĕхлĕ вăрçăсемпе тĕрĕслĕхлĕ мар вăрçăсем çинчен, империализм вăрçине хирĕç кĕрешмелли çулсем çинчен вĕрентнипе идея тĕлĕшĕнчен хĕçпăшаллантарать. Парти социализм малтанлăха нумай мар çĕршывсенче е уйрăммăн илнĕ пĕр капитализмлă çĕршывра çĕнтерме пултарасси çинчен калакан Ленинăн гениллĕ вĕрентĕвĕпе хĕçпăшалланать.

Пирĕн парти историйĕнчи чи йывăр самантсенчен пĕринче, 1917 çулхи июль кунĕсем хыççăн, Керенскин империалистла правительстви партие çав тери тискер хĕсĕрленĕ кунсенче Ленин, пытанса пурăнса, большевиксен партийĕ çинчен хавхаланса çапла çырнă: «Эпир ăна ĕненетпĕр, унра эпир пирĕн саманан ăсне, чысне тата совеçне куратпăр» (В. И. Ленин. Соч., 25 т., 239 стр.).

Империализм саманинче, миллиардерсемпе миллионерсем, политикăллă ăссăрлăхпа тата вăрçăра çав тери пысăк тупăш илме çынçиенле хапсăнса, халăхсене империализмлă вăрçа кĕртсе янă, тўсме çук пысăк асапа хĕн-хур кăтартнă чухне, Ленин коммунистсен партине пирĕн саманан ăс-хакăлĕ тесе шутланă. Коммунистсен партине Ленин халăхсене империализмлă вăрçăсене пĕтермелли çула кăтартса пама, халăхсене çак кĕрешĕве çĕклеме пултаракан парти, тесе шутланă.

Империализм саманинче, вилсе тата çĕрсе пыракан капитализм, капиталистла чура хуçисен хăрса пыракан влаçне çăлса хăварас тесе, чи намăссăр та тискер преступленисем тунă чухне, чыспа совеçе империалистсем ниме кирлĕ мар япала тенĕ чухне, коммунистсен партине Ленин пирĕн саманан таса совеçĕ, халăхсен пурнăçне, чысĕпе ирĕклĕхне çăлса хăваракан аслă вăй, тесе шутланă.

1917 çулта Ленинпа Сталин империализм сăнчăрне чи малтан Российăра татма май пуррине курнă, çавăнпа та революци çулпуçĕсем Ленинпа Сталин рабочи класа «Пĕтĕм влаçа Советсене!» текен лозунг тăрăх социализмлă революци çĕнтерĕвĕ патне шанчăклăн илсе пынă. Большевиксен партийĕ помещиксен, капиталистсен партийĕсене (черносотенецсене, кадетсене), капиталистсемпе помещиксене хўтĕлекенсем, империалистсемшĕн ĕçлекенсем пулса тăнă вак буржуаллă, соглашателлĕ партисене (эсерсене, меньшевиксене тата ыттисене те) халăх

куçĕ умĕнче тăрă шыв çине кăларма пултарнă. Ленин—Сталин партийĕ халăхăн ытларах пайне хăй енне çавăрнă, вăл помещиксене хирĕç, капиталистсене хирĕç кĕрешекен пĕртен-пĕр парти, империализмлă вăрçăсене, капиталистсемпе помещиксем пуç пулса тăнине пĕтерсе, чăн-чăн халăх влаçĕ тума пултаракан пĕртен-пĕр парти пулнине ĕçре кăтартса влаçа илнĕ.

«Эпир, большевиксен партийĕ, Российăна ĕнентертĕмĕр. Эпир Российăна пуянсенчен чухăнсем валли, эксплуататорсенчен ĕçсыннисем валли çĕнтерсе илтĕмĕр»,—тесе çырнă Ленин 1918 çул пуçламăшĕнче (В. И. Ленин. Соч., 27 т., 214 стр.).

1917 çулхи октябрĕн 26-мĕшĕнче тухса каланă хăйĕн историллĕ сăмахĕнче, мир çинчен калакан декрета никĕслесе парса, пролетариатăн çамрăк государствин вăйĕ массăсен ăнланулăхĕнче пулнине Ленин гениллĕ кăтартса панă. Ленин эпир вăй тейине мĕне ăнланни буржуази вăй тенине мĕне ăнланнинчен пачах уйрăм пулнине кăтартса панă.

«Буржуази ăнланнă тăрăх, вăй вăл массăсем, империалистла правительствă сем хушшине итлесе, суккăр пек вăрçа кайни пулать,—тенĕ Ленин.—Государство хăйĕн правительство аппарачĕн мĕнпур хăвачĕпе массăсене буржуалла пуçлăхсем ăçта ярас тенĕ, çавăнта яма пултарнă чух кăна буржуази государствăна вăйлă, тесе шутлать. Вăй тенине эпир урăхла ăнланатпăр. Эпир государство массăсен ăнланулăхĕпе вăйлă тесе шутлатпăр. Массăсем пурне те пĕлсе тăрсан, пурин çинчен те шутлама пултарсан, пур ĕçе те ăнланулă тусан кăна государство вăйлă пулать» (В. И. Ленин. Соч., 26 т., 224 стр.).

Ленин генийĕ тунă Совет государствин пĕтĕм историйĕ çакна кăтартса парать: вăл хăйсен Тăван çĕршывне çав тери аслă хăватпа хўтĕлекен массăсен ăнланулăхĕпе вăйлă.

«Эпир халĕ, 1917 çулхи октябрĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа, — оборонецсем, эпир—çак кунтан пуçласа Тăван çĕршыва хўтĕлессишĕн тăратпăр. Мĕншĕн тесен эпир империализмран уйрăлса кайнине ĕçре кăтартса патăмăр»—тенĕ Ленин (В. И. Ленин. Соч., 27 т., 42 стр.).

Революци сирпĕтсе антарнă помещиксемпе капиталистсен класĕсем тата хĕçпăшаллă интервенци тунă империалистла государствăсем пире хирĕç пуçласа янă граждан вăрçи совет халăхĕ çĕнтерў тунипе вĕçленчĕ. Российăна пайлама тата пусмăра кĕртсе ўкерме ĕмĕтленнĕ Америка, Англи, Франци тата ытти çĕршыв империалисчĕсен планĕсем, гуверсемпе уркартсен планĕсем путланса ларчĕç. Ют çĕршывсен оккупанчĕсене, пирĕн халăха нихăçан манмалла мар йывăр хĕн-хур кăтартнă тата пурлăх енĕпе питĕ пысăк сиен кўнĕ оккупантсене, совет халăхĕ хăйĕн çĕрĕ çинчен хăваласа кăларса ячĕ. Ленин—Сталин партийĕ, хăйĕн пĕрлĕхĕпе тата пĕтĕçўлĕхĕпе вăйлă, миллионлă массăсене организацилеме никамран ăста пĕлекен парти, тылпа фронтăн, Хĕрлĕ Çарăн ертсе пыракан чăмăрĕ пулнă, çавăнпа Совет республики интервентсемпе шурă гвардеецсен йышлă çарĕсене çĕнтернĕ.

«Россия тĕнчери империализм тапăннине парăнмарĕ пулсан, — тесе каланă Сталин юлташ 1921 çулта,—вăл тулашри фронтсенче пысăк çитĕнўсем чылай турĕ пулсан, вăл ик-виçĕ çул хушшинче тĕнчери империализм никĕсĕсене кисрентерекен вăй пулса тăчĕ пулсан, çакна вăл, ыттипе пĕрлех, пĕтĕçўллĕ, çапăçусенче çирĕпленнĕ тата çирĕп хурçăран тупăнса тунă коммунистсен партине пула тума пултарчĕ, çак парти хăйĕн членĕсем нумайрах пулччăр тесе çĕс тăрăшни нихăçан та пулман, вăл чи малтан хăйĕн членĕсен йышне лайăхлатса пырассишĕн тăрăшнă» (И. В. Сталин, Соч., 5 т., 99 стр.).

Совет государстви пуçланă малтанхи çулсенчех, ун чухне пирĕн çĕршыв техника тата экономика енĕпе, хăватлăрах капитализмлă государствăсемпе танлаштарсан, кая юлнă тата вăйсăртарах пулнă пулин те, çав вăхăтрах унăн моралллĕ-политикăллă питĕ пысăк вăй пурри, питĕ пысăк çирĕплĕхпе тĕреклĕх пурри курăнчĕ.

Партипе Совет государстви тунă ĕçсен итогĕсене палăртса, партин XI-мĕш съездĕнче Ленин çапла каланă:

«...Вырăс революцийĕ кĕрешўре çĕнтерсе илнисене никам та туртса илеймĕ. Ăна, Совет государстви халиччен тунисене тĕнчери нимĕнле вăй та каялла туртса илме пултараймасси пекех, нимĕнле вăй та туртса илме пултараймасть» (В. И. Ленин, Соч., 33 т., 270 стр.).

Мускав Совечĕн пленумĕнче каланă хăйĕн юлашки сăмахĕнче Ленин çакна шанчăклăн астутарнă: «социализм халĕ ĕнтĕ инçетри пулас вăхăт ыйтăвĕ мар», пирĕн парти халăха социализм çĕнтерĕвĕ патне илсе çитерме пултарать.

Ленинпа Сталин ертсе пынипе пирĕн парти хăйĕн политикинче пысăк улшăну тума—«вăрçăллă коммунизмран» çĕнĕ экономикăллă политикăна куçма пултарчĕ, вăл политика рынокри лару-тăрупа усă курасси, рабочисемпе хресченсем хушшинчи çыхăнăва çирĕплетсе пырасси, капиталистла элементсене хĕссе кăларасси тата социализмлă экономика никĕсне хывасси çинче никĕсленсе тăнă.

Аслă Ленин каланисем пурнăçланчĕç, вăл социализмлă общество тума хушса хăварнисене пурнăçа кĕртнĕ. Коммунистсен партийĕ, Сталин юлташ ăста ертсе пынипе, Ленин хушса хăварнисене ленинизм тăшманĕсем тапăнасран сыхласа хăварчĕ, совет халăхне пирĕн çĕршывра социализмлă общество тăвас ĕçĕн аслă идейисемпе хавхалантарма пултарчĕ, социализмăн пур йышши тăшманĕсене те аркатса тăкрĕ, тăшмансем социализмлă индустриализацие ялхуçалăхне коллективизацилес ĕçе аркатма тăнине хăватлăн сирсе пăрахрĕ, пирĕн çĕршыва социализм çĕнтерĕвĕ патне илсе пычĕ. Сталинла пилĕкçуллăхсем хушшинче, историре пулман кĕске срокра, совет стройне пула, халăх массисен ĕçри пысăк çĕкленĕвне пула пирĕн çĕршыв хăй техникăпа экономика тата культура тĕлĕшĕнчен кая юлнине пĕтерчĕ, кая юлнă ялхуçалăхлă çĕршывран вăл индустриллĕ-колхозлă хăватлă держава пулса тăчĕ.

Социализмлă çĕршывăн хăватлăн ўснĕ техникăллă-экономикăллă хăвачĕпе пĕрле совет халăхĕн никам çĕнтерейми моралллĕ-политикăллă пĕрлĕхĕ—Европăри оккупациленĕ пур çĕршывсен техникипе экономикине хăй аллинче тытса тăнă гитлерла Германи пирĕн çине ултавлă тапăннине чарса лартма пултарчĕ çеç мар, вăл фашистла Германипе империалистла Японие аркатса тăкма тата Европăри халăхсене фашизм пусмăрлăхĕнчен çăлса хăварма пултарчĕ. Хăюллăнах çапла калама пулать: массăсен ăнланулăхĕпе тата халăхăн моралллĕ-политикăллă пĕрлĕхĕпе вăйлă совет государстви кăна, Ленин—Сталин партийĕ ертсе пыракан совет патриочĕсем кăна вăрçăн малтанхи тапхăрĕнчи çав тери пысăк йывăрлăхсене тўсме тата этемлĕхĕн чи усал тăшманне—нимĕç фашизмне татăкланах çĕмĕрсе тăкса çĕнтерў тума пултарчĕç.

Совет Союзĕ фашистла Германипе империалистла Японие хирĕç кĕрешсе тĕнчипе паллă историллĕ çĕнтерў тупни Европăпа Азири чылай çĕршывсене хăйсен кун-çулне хăйсен аллине илме май пачĕ, Вăтаçĕр тата Кăнтăр-Хĕвелтухăç Европăри чылай çĕршывсенче халăх демократи стройĕ çĕнтерес ĕçе çăмăллатрĕ, Китайра халăхăн аслă революцийĕ çĕнтерес ĕçе çăмăллатрĕ. Тĕнчери пĕтĕм лару-тăру тĕпрен улшăнчĕ, мир, социализм тата демократин хăватлă лагерĕ пулса тăчĕ. Капитализм системипе социализм системи хушшинчи вăйсем улшăнчĕç. Тĕнчене демократипе социализм никĕсĕ çинче çĕнетес ĕç малалла кайрĕ.

Совет халăхĕпе малта пыракан пĕтĕм этемлĕх пирĕн мĕнпур çĕнтерўсене хавхалантарса тата организацилесе пынă аслă çулпуçне Сталин юлташа ĕмĕр ырă ятпа тав тăвĕç, унăн политикăллă, организаторлă тата стратегиллĕ генийĕ этемлĕхĕн малашлăхне çăлса хăварчĕ! **(Нумайччен, тăвăллăн алă çупаççĕ).**

Обществăна революциллĕ улăштарса çĕнетес тĕлĕшпе марксистла çĕнĕ сăнарлă парти хăйĕн мĕнпур ĕçне общество аталанăвĕн наука тĕпчесе пĕлнĕ законĕсем тăрăх, марксизм-ленинизмăн аслă науки тăрăх туса пырать. Пирĕн парти тата тăванла коммунистсен партийĕсемпе рабочи партисем мĕнпур буржуалла тата вак буржуалла, соглашателлĕ партисенчен малта тăни çакăнта пулать.

«Пирĕн парти кăна ĕçе ăсталла илсе пымаллине пĕлет, вăл ăна ăнăçлăн малалла илсе пырать,—тесе кăтартса парать Сталин юлташ.—Пирĕн партин çак лайăх енĕ мĕнрен килет-ха? Вăл марксистла парти, ленинла парти пулнинчен килет. Вăл хăйĕн ĕçне Маркс, Энгельс, Ленин вĕрентĕвĕ тăрăх туса пынинчен килет. Иккĕленмелли çук, эпир çак вĕрентў тăрăх тĕрĕс ĕçлесе пынă чухне, çак компас пирĕн алăра чухне—пирĕн ĕçре çитĕнўсем пулĕç»—тесе вĕрентет Сталин юлташ (Соч., 13 т., 377 стр.).

Большевизм вăрçăна империализм кўрекен хĕн-хуртан çăлăнма тĕрĕс çул кăтартса пачĕ, тенĕ Ленин. Çак сăмахсене пĕтĕм тĕнче историйĕ тўрре кăларчĕ. Ленин—Сталин партийĕн историллĕ аслă опычĕпе тĕслĕхĕ тăрăх тăванла коммунистла партисем тĕнчене социализм никĕсĕ çинче çĕнетес ĕçе туса пыраççĕ.

Юлашки 2-мĕш страницăра.

В. И. Ленин вилнĕренпе XXVIII çул тултарни çинчен

Мускавра пулнă хурлăхлă-чаплă ларура П. Н. ПОСПЕЛОВ юлташ тунă доклад

Юлашки. Пуçламăшĕ 1-мĕш страницăра.

II. Ленин—Сталин партийĕ совет халăхне коммунизм патне илсе пырать

Эпир социализмлă общество туса çитерсе, майĕпе коммунизма куçнă аслă сталинла саманара пурăнатпăр.

«Капитализмран,—тесе çырнă Ленин «Пролетариатăн пирĕн революцири задачисем» ятлă статьинче,—этемлĕх тÿрремех социализма кăна, урăхла каласан, производство средствисене пĕрле тытса тăрасси тата продуктсене кашнин ĕçне кура валеçесси патне кăна куçма пултарать. Пирĕн парти малалла пăхать: социализм пурпĕрех майĕпе коммунизма ÿссе çитмелле, унăн ялавĕ çинче вара çапла каланă: кашни—хăй пултарнă таран, кашнине—ăна кирлĕ таран» (В. И. Ленин. Соч., 24 т., 62 стр.).

Ленин çапла кăтартса панă: коммунизма куçма çĕршывăн пĕтĕм хуçалăхне малта пыракан техника никĕсĕ çине куçармалла.

«**Коммунизм вăл—совет власĕ тата пĕтĕм çĕршыва электрификацилени**»,—тесе темиçе хутчен те кăтартса панă Ленин.

Ленин çапла каланă: «Коммунизм вăл—ирĕклĕ, ăнланулла, пĕрлешнĕ, малта пыракан техникăпа усă куракан рабочисен капитализм чухнехинчен çÿлĕ ĕç тухăçлăхĕ» (В. И. Ленин. Соч., 29 т., 394 стр.).

Майĕпе коммунизма куçма çакăн пек тĕп условисем кирлĕ тесе кăтартса панă Ленин:

а) промышленносра та, ялхуçалăхĕнче те çĕнĕ техника никĕсĕ çинче, производство вăйĕсем тăтăшах вăйланса пынă никĕс çинче ĕç тухăçлăхне чи çÿлĕ пусăма çитиччен ÿстерни;

б) коммунистла ăнланулла пулма воспитани пани, воспитани парса çĕнĕ çын хатĕрлени, уншăн ĕç «пурнăçра чи малти вырăнта тăраканĕ, чи кирли» пулса тăни.

Сталин юлташ Ленинăн пĕр çĕршывра социализм тума пуласси çинчен калакан теорине малалла аталантарнă, çĕршыв тулашĕнче капитализмлă йĕри-тавралăх юлсан та, пирĕн çĕршывра коммунизм тума пуласси çинчен генилле теориллĕ вывод тунă. Çак вывод партине совет халăхне коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн кĕрешме аслă малашлăх кăтартса панă.

Пĕтĕм совет халăхĕ калама çук пысăк творчествăллă çĕкленÿпе коммунизмăн сталинла аслă стройкисене, хăватлă гидроэлектростанцисем, çĕре шăвармалли пысăк каналсем тăвать. Коммунизмăн аслă стройкисем, çутçанталăка улăштарса çĕнетмелли план ăнăçлă пурнăçланса пынипе пĕрле, коммунизмăн материально-техникăллă никĕсне тăвас ĕçĕн чи кирлĕ те паха пайĕсенчен пĕри пулса тăрасçĕ. Пирĕн çĕршывра обществăллă пуянлăха, пурнăçри ырлăхсене нумайлатмалли, инкĕсĕмли нумай апат-çимĕç, тумтир туса хатĕрлемелли çĕнĕ çăлкуçсем уçăлаççĕ. Ялхуçалăхĕ çутçанталăкри ăнсăртлăхсене пăхăнса тăрасси кĕске вăхăт хушшинчех нумай чакать, коммунизм строителĕсем çутçанталăка ытларах та ытларах хăйсене пăхăнтарма тытăнаççĕ. Энгельс малтанах каласа панă паллă сăмахсем—обществăллă пурнăçа хăйсем тытса тăма пуçланă çынсем «çавна пула çутçанталăк хуçисем пулса тăраççĕ», тесе каланисем пурнăçланса пыраççĕ.

Коммунизм строительстви саманинче промышленность, ялхуçалăхĕ, транспорт, строительство çĕнĕ, малта пыракан техникăпа хĕçпăшалланасси ытларах та ытларах вăйланать. Çакă вăл производствăри йывăр ĕçсене механизацилеме, ĕçе çăмăллатма тата ĕç тухăçлăхне вĕçĕмсĕр ÿстерсе пыма май парать.

Буржуаллă строй вăхăтĕнче машинăсемпе усă курасси капиталист мĕн чухлĕ услам илме май килнине шута илнипе çыхăнса тăрать, вăл машина нумайрах услам парасси паларсан çеç унпа усă курать. Социализм чухне, уйрăмах социализмран майĕпен коммунизма куçнă чухне, машинăпа çĕнĕ техника ролĕ ытларах та ытларах ÿссе пырать. Маркс малтанах

çакăн пек каласа панă: «Коммунизмлă обществăра машинăсем буржуаллă обществăран пачах урăхла вырăн тупăччĕç» тени пурнăçланса пырать. («Капитал», 1 т., 399 стр., 1951 çулхи издани).

Чи пысăк та кăткăс машинăсемпе тата ĕçре малти вырăнта тăракан меслетсемпе усă курма пĕлни, производствăра вăйлă культурăшăн кĕрешни, производствăра наукăпа тата техника пĕлĕвĕсемпе усă курни, творчествăллă пуçарулăх, пысăк пахалăхлă продукци кăларнипе пĕрлех производствăри хăвăртлăхсене ÿстерессишĕн тăрăшни, чĕртавара, электричество энергине, топливăна, материалсене перекетлессишĕн кĕрешни—акă мĕнле хальхи тапхăрти социализмлă ăмăртăвăн уйрăмах палăрса тăракан паллисем. Коммунизм строителĕсем Ленин хушса хăварнă пысăк халалсенчен пĕрне, Сталин юлташ кăтартса панине—«пĕчĕк ĕçрен нихçан та ан пăрăнăр, мĕншĕн тесен пĕчĕк ĕçрен питĕ пысăк ĕç пулса пырать» тенине асра тытăççĕ, ăна пурнăçласа пыраççĕ. Перекетленĕ минутсемпе секундсем, перекетленĕ кашни грамм тата килограмм чĕртаварпа материалсем, вĕсене пирĕн предприятисен тата пирĕн çĕршывăн питĕ пысăк анлăшĕнче пĕрлештерсен, питĕ пысăк хисеп пулса каяççĕ, çĕршер пин, миллионсем пулса тăраççĕ.

Ĕççыннисене коммунистла воспитани парасси—коммунизмлă общество тăвассишĕн кĕрешес ĕçри питĕ паха задача. Кашни совет çынни хăйĕн пултарулăхне кура тÿрĕ кăмăлпа ĕçлени майĕпен коммунизмлă обществăна куçса пыма кирлĕ паха условисенчен пĕри пулса тăрать,—коммунизмлă обществăра ĕçлени вăл обществăн кашни членĕшĕн пурнăçра чи кирли пулать, вара, ăнланулăх ÿснĕ тата пурăнма кирлĕ япаласем пĕтĕмпех ытлăн-çитлĕн пулнă никĕс çинче, пурăнма кирлĕ япаласене кирлĕ чухлĕ парса тăма — майĕпен çавăн пек йĕрке тума пулать.

Обществăллă социализмлă харпăрлăха малалла ÿстерсе тата çирĕплетсе пыни совет халăхĕ коммунизм патне ăнăçлăн малалла пыма питĕ кирлĕ услови пулса тăрать. Коммунистсен партийĕпе Совет государстви совет çыннисене обществăллă социализмлă харпăрлăха перекетлĕ тыткалама вĕрентеççĕ, хуçасăрлăха, пурлăха салатса пĕтернине хирĕç, обществăллă социализмлă харпăрлăха тирпейсĕр е преступникла тыткаланине хирĕç, государствăна хирĕçле тĕрлĕрен туртăмсене хирĕç ывăнма пĕлмесĕр кĕрешеççĕ.

Совет халăхĕ, Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе, ăнăçлă коммунизм обществи тăвать. Вăрçă хыççăнхи пĕрремĕш пилĕк çуллăх плана срокчен тултарни, пĕтĕм тĕнчипе пысăк пĕлтерĕшлĕ çак ĕç, коммунизмăн материально-техникăллă никĕсне тумалли çул çинче пысăк утăм туни пулчĕ.

Совет Союзĕнчи халăхсем вăрçă хыççăнхи пилĕк çуллăх плана ăнăçлă пурнăçларĕç, 1951 çулта коммунизм строительстви фронтĕнче çĕнĕрен пысăк çĕнтерÿсем тÿрĕç, вĕсен çак çитĕнĕвĕсем пĕтĕм тĕнчери мирпе демократи вăйĕсене ÿстерчĕç тата мĕнпур çĕршывсенчи халăхсене малашнехи ырă пурнăç патне çитмелли çула кăтартса пачĕç.

Эпир халĕ ĕнтĕ çапла калама пултаратпăр: коммунизм вăл тахçан ÿлĕм пуласси мар, вăл совет халăхĕн хаваслă аслă ĕçне пула, пирĕн наукăпа техника çĕнĕ çитĕнÿсем туса пынă май, ĕç тухăçлăхĕ пĕрмаях ÿссе пынă тата совет çыннисен материально-культурăллă шайĕ хăпарса пынă май ÿссе пырать тата малалла ÿссе пырĕ.

Социализмлă система капитализмлă системăран нумай малта тăни халех ĕнтĕ уççăн курăнчĕ пулсан, социализмран майĕпен ÿссе пыракан коммунизмлă общество капитализмлă стройран малта тăни тата ытларах, тата уççăн курăнса тăмалла пулĕ.

III. Социализмпа демократие никам та çĕнтереймĕ

Çамрăк Совет республики çуралса тата çирĕпленсе пынă вăхăтра, 1918 çулхи январьте, Советсен Пĕтĕм Российăри виçсĕмĕш съездĕнче, Ленин: халăхсем социализм патне çитме пуçласа янă юхăма, малти вырăнта вырăс рабочи класĕ пыракан юхăма, никам та çĕнтерме пултараймасть, тесе каланă.

«Пирĕн Советсен социализмлă республики,—тесе кăтартса панă Ленин,—пĕ[illegible]ĕнчери социализм маякĕ пулса тата [illegible] ĕççыннисемшĕн ырă тĕслĕх пулса [illegible] çинче çирĕп тăрĕ. Лере—çапăçу, [illegible], унта юн юхать, миллионшар çынсем вилеççĕ, капитал эксплуатацилет, кунта — чăн-чăн мир политикипе Советсен социализмлă республики» (В. И. Ленин. Соч., 26 т., 429 стр.).

Икĕ тĕнче—капитализм тĕнчи тата социализм тĕнчи хушшинчи питĕ пысăк уйрăмлăхпа хире-хирĕçлĕх халĕ нихçанхинчен ытларах уççăн курăнса тăрать. Капитализм тĕнчи вилсе, çĕрсе пырать, этемлĕхе вĕлерсе пĕтермелли тĕнсĕр шырлана тĕртет. Социализм тĕнчи, пурнăçра хăйĕн никам çĕнтерейми вăйне кăтартса панă, яланах ленинла-сталинла мирлĕ политика тытса пыракан социализм тĕнчи, этемлĕхĕн пĕртен-пĕр шанчăкĕ пулса тăрать.

Капитализм лагерĕнче урнă пекех васкаса хĕçпăшалланаççĕ, производство вăйĕсене усăсăр пĕтереççĕ,çынсене вĕлерсе пĕтермелли çĕнĕ вăрçă кăларма чĕнеççĕ, тискер законсене, вăйпа пусмăрламалли империалистла политикăна ырласа калаççĕ, саратма, вĕлерме тата аркатса пĕтерсе пыма чĕнеççĕ. Капитализм лагерĕнче капитализмла эксплуатаци, нациллĕ пусмăр нихçанхинчен ытларах вăйланса пырать, унта расăсемпе нацисем пĕр-пĕрин çине тăшманла пăхассипе чĕртсе пыраççĕ, фашизма каллех вăй параççĕ, унта, васкаса хĕçпăшалланмалли политика тытса пынине, тавар хакĕсем ÿснипе тата укça йÿнелнине пула, ĕççыннисен пурнăçĕ пĕрмаях начарланса пырать.

Буржуаллă Америка хаçачĕсенче те вăрçăран тупăш илмелли «бизнес», тупăшлă предприяти, урса кайсах пуймалли, çĕрсе пыракан капитализмлă экономикăна искусственнăй майпа чĕртмелли намăсла, этеме хирĕçле системăна сивлесе каланă сăмахсем илтĕнме пуçлаççĕ.

Çак кунсенче Америка провинцийĕнче тухакан «Ньюс» хаçатра Америка çарĕн отставкăна тухнă Холдридж генералĕн çырăвне пичетлесе кăларнă. Унта вăл, Америка пичечĕн суя пропагандине тăрă шыв çине кăларса, çапла çырнă: «Вăрçă вăл—Америка бизнесĕ. «Çынсене вĕлермелли концерн» пирĕн тĕп предприяти пулса тăчĕ. Çак ĕçе эпир çулсерен 100 миллиард доллар хыватпăр. Çак тупăшлă ĕçе эпир ăнсăртран сухатас-мĕн пулсан, пирĕн экономика пĕр кун хушшинчех арканса кайнă пулĕччĕ».

Америкăри хаçат-журналсенче çавăн пек каланисем пичетленме пуçларĕç.

Социализмпа демократи лагерĕнче — чăн-чăн мирлĕ политика, миршĕн кĕрешес ĕç, кунта вăрçăшăн тăракан çынсем тата çынсен ушкăнĕсем çук, кунта производство вăйĕсем хăватлан ÿссе пыраççĕ, кунта халăхсен пĕртанлăхĕпе туслăх политики, çутçанталăка улăштарса çĕнетекен аслă стройкăсем, творчествăллă, мирлĕ ĕçĕн пысăк çĕкленĕвĕ. Социализм лагерĕнче ĕççыннисен материальнăй тата культурăллă пурнăç условийĕсем пĕрмаях лайăхланса пыраççĕ, социализмпа демократи лагерьне кĕрекен пур çĕршывсемпе халăхсем те пĕр-пĕрне пулăшса пынипе пĕрмаях малалла пыраççĕ. Социализмлă аталанăвăн çул-йĕрĕ малта пыракан чи лайăх çул-йĕр пулса тăни халĕ Совет Союзĕн историллĕ опытĕнчен кăна мар, халăх демократи çĕршывĕсен опытĕнчен те лайăх курăнать.

Ленин 1922 çулта çапла каланă: капиталистла правительствăсем империализмлă вăрçа «хăйсен сăмси айĕнче мĕн выртни енчен илсе» хакланă, вăрçă хирĕçĕвĕсемпе асапĕсем мĕн патне илсе пынине ăнланмая.

«Эпир, коммунистсем,—тенĕ Ленин,—вăрçа тарăнрах та тĕрĕсрех ăнланатпăр, вăрçă хирĕçĕвĕсемпе асапĕсем капиталистла государствăсем шутланинчен шаларах илсе каяççĕ, терĕмĕр. Вара, буржуаллă çĕршывсем—çĕнтерекенсем çине айккинчен пăхса, эпир çапла каларăмăр: эпир малтанах курса калани çинчен, эпир вăрçă ăçта илсе кайнине хак пани çинчен вĕсем пĕр хут çеç мар аса илĕç-ха» (В. И. Ленин. Соч., 33 т., 188—189 стр.).

1926 çулта, тĕнчери буржуази иккĕмĕш тĕнче вăрçине хатĕрлеме тытăннă вăхăтра, Сталин юлташ малашнехине витĕр курса, пĕр хут вăлеçнĕ тĕнчене тепĕр хут валеçме хăтланни «тĕнчери капитализма малтанхинчен нумай хаклăрах тăрĕ».—тесе асăрхаттарчĕ. (И. В. Сталин. Соч., 9 т., 108 стр.).

Истори Сталин юлташ малашнехине генилле курса каланă сăмахсем тĕрĕс пулнине кăтартса пачĕ. Пĕрремĕш тĕнче вăрçипе Октябрьти Социализмлă Аслă революцие пула капитализм системинчен 140 миллион çынна яхăн, çĕр чăмăрĕн улттăмĕш пайĕ уйрăлса кайнă, капитализмăн пĕтĕмĕшлĕ кризисĕ вăйланнă пулсан, иккĕмĕш тĕнче вăрçипе тата социализм фашизма çĕнтернипе пула вара капитализм системинчен 800 миллион çын ытла уйрăлса кайрĕ, мирпе социализмăн тата демократин аслă лагерĕ пулса тăчĕ.

Миршĕн тăракансен историре халиччен нихçан пулман хăватлă, пур халăхсем хушшинче те, пур çĕршывсене те сарăлнă, организациленнĕ юхăмĕ пуçланса кайрĕ. Çак юхăм империалистсене халăхсене суйса улталама, вĕсене вăрçа кĕртсе яма чăрмантарать.

«Мире сыхласа хăварас ĕçе халăхсем хăйсен аллине илсен тата ăна вĕçне çитичченех хÿтĕлесе тăрсан, мир сыхланса юлĕ тата тĕреклĕнĕ»,—тесе вĕрентет Сталин юлташ.

Сталин юлташăн аслă сăмахĕсем халăхсене мире сыхласа хăварассишĕн тата та активлăрах кĕрешме хавхалантарчĕç. Пилĕк аслă держава хушшинче мире сыхламалли килĕшÿ тума чĕнсе калани çине 600 миллион çын алă пусни халăхсем пĕр шухăшлă пулса мирлĕ пурнăçшăн тăнине пĕлтерет, вăрçă пуçарма хатĕрленекенсене хытă асăрхаттарни пулать.

Иккĕмĕш тĕнче вăрçи хыççăн капитализмăн пĕтĕмĕшле кризисĕ çĕнĕ тапхăра кĕчĕ, вăл малашне тата ытларах çивĕчленсе тата сарăлса пырас пирки нимĕн иккĕленмелли те çук. Империалистсен лагерĕнче хирĕçÿсем вăйланаççĕ. Хальхи тапхăрта империализмăн колониллĕ пĕтĕм системин кризисĕ уйрăмах хытă çивĕчленчĕ. Азири çĕршер миллион çынлă халăхсем, çĕр çинчи пĕтĕм халăхăн ытларахăшĕ пулса тăракан халăхсем политикăллă пурнăçа активлă хутшăнма тытăнчĕç, кĕрешĕве çĕкленчĕç тата кĕрешĕве хутшăнса пыраççĕ.

Азири халăхсем кĕрешĕве çĕкленни творчествăллă марксизм чаплă çĕнтерÿ тунине, Ленинпа Сталин социализмла революци çинчен вĕрентекен теори чаплă çĕнтерÿ тунине кăтартса парать. «Социализмла революци,—тесе вĕрентнĕ Ленин,—пирĕн ытларах кашни çĕршыври пролетарисем хăйсен буржуазине хирĕç кĕрешни кăна пулмĕ,—çук, вăл империализм пусмăрласа тăракан мĕнпур колонисемпе çĕршывсен, пăхăнса тăракан çĕршывсен пĕтĕм тĕнчери империализма хирĕç пыракан кĕрешĕвĕ пулса тăрĕ» (В. И. Ленин. Соч., 30 т., 138 стр.).

Азири çĕршывсенче феодализма хирĕç тата империализма хирĕç питĕ пысăк революци сарăлса пырать. Вăл Америкăпа Англи империалистла пуçлăхĕсен планĕсене тата вĕсем мĕн тума шутланисене пĕтерсе лартать.

Хальхи вăхăтри империализм Азири кĕрешĕве çĕкленнĕ халăхсене империалистла эксплуатаци пусмăрĕ айне тума пултарайманнипе, çак халăхсене халĕ ĕнтĕ нимĕнле вăй та тытса чарма пултарас çуккине Америкăри влаçра тăракан ушкăнсен хăшпĕр представителĕсен те ирĕксĕрех, шăлĕсемпе шаклатсах, йышăнма тивет.

«Кам çил кăларать, вăл çил-тăвăла лекет». Капитализмлă колониллĕ державăсем хăйсен вăрă-хурахла, çаратмалли, пусмăрламалли политикипе Азири халăхсене çĕршер çулсем хушши тарăхтарса пурăннă. Халĕ вĕсем çил-тăвăла тата аçа-çиçĕмлĕ çумăр айне лекнĕ. Англи журналисчĕ Р. Пейн нумай пулмасть Нью-Йоркра «Ази çинчи хĕрлĕ аçа-çиçĕм» ятлă кĕнеке пичетлесе кăларнă. Ку кĕнекере вăл империализмлă державăсен, пуринчен малтан США-н колониллĕ политики путланса ларнине йышăнать. Вăл Азири халăхсен наци ирĕклĕхĕшĕн пыракан хăватлă юхăмне халĕ пусарма май çуккине йышăнать. «Азире юлашки пилĕк çул хушшинче пулса иртнĕ улшăнусене пирĕн пĕтĕмпех тĕплĕн ăнланса илес пулать: революциллĕ çил-тăвăл темиçе çĕр çул хушши пулса пынă пекех курăнать»,—тет Пейн. Çак буржуалла журналист хăйсене савăнтарман вывод тăвать: «Хальхи вăхăтра çав юхăма тытса чарма пултарассине е çарсем ăна каялла чакарма пултарассине шанса тăни вăл—усăсăр шухăш».

Ленин ĕлĕк кая юлнă тата пусмăрти çĕршер миллион çынлă халăхсем, çĕр çинчи халăхăн пысăк пайĕ пулса тăракан халăхсем истори аталанăвне активлă хутшăнма пуçланипе пĕтĕм тĕнче историйĕ халиччен нихçан пулман хăвăртлăхсемпе малалла аталанасси çинчен каланă. Çакна шута илсе Ленин «социализм татăклăнах, пурпĕрех çĕнтересси пурнăçа кĕрет», тенĕ (Соч., 33 т., 458 стр.).

Пĕтĕм тĕнчери империализм халăхсене халĕ татах та пысăк инкек тата хĕн-хур кăтартма пултараççĕ, анчах вăл халĕ ĕнтĕ истори кустăрмине каялла çавăрма пултараймасть.

Америкăпа Англи империалисчĕсем виççĕмĕш тĕнче вăрçине пуçарма хăйсан, вăл тĕнчери капитализма халиччен тĕнче вăрçисенчен те хаклăраха ларĕ, вăл тĕнчери капитализмăн вилĕмне хăвăртлатма кăна пултарать.

* * *

Совет халăхĕ шанчăклăн коммунизм обществи тăвать, мĕншĕн тесен унăн хастарлă ĕçне ленинизмăн вилĕмсĕр вĕрентĕвĕ ялкăшса çутатса тăрать. Ленин—Сталинăн аслă идейисем совет çыннисене паттăр ĕçсем тума хавхалантараççĕ, çĕнĕ çĕнтерÿсемшĕн кĕрешме чĕнеççĕ, коммунизм татăклăнах çĕнтерес шанчăка çирĕплетеççĕ.

В. И. Ленинпа И. В. Сталинăн генилле кĕнекисем пирĕн çĕршывра тата пĕтĕм тĕнчере ытларах та ытларах сарăлаççĕ. Вĕсем тăрăх çĕршер миллион çынсем пурăнма, ĕçлеме тата çĕнтерме вĕренеççĕ.

Сталин юлташ партин XIV съездĕнче çапла карарĕ: «Пирĕн кадрсем, çамрăккисем те, ваттисем те, идея тĕлĕшпе ÿсеççĕ. Эпир Ленин Сочиненийĕсене темиçе изданипе кăларни вăл—пирĕн телей... Çак факт пирĕн парти ленинизм çулĕ çинчен пăрăнас çуккин тĕп гарантийĕсенчен пĕри пулса тăрать» (И. В. Сталин. Соч., 7 т., 342 стр.).

Пирĕн партин Центральнăй Комитечĕ йышăннипе тата вăл ертсе пынипе иртнĕ çулăн пуçламăшĕнче В. И. Ленин Сочиненийĕсен тăваттăмĕш изданине кăларас ĕç вĕçленчĕ. Çак изданире 35 том, вырăсла вăл çур миллион тиражпа тухнă, ăна пирĕн çĕршыври халăхсен чĕлхисем çине куçараççĕ, вăл пирĕн кадрсене идейăллă воспитани тата политикăллă çирĕплĕх паракан калама çук паха çăлкуçĕ, вăрне те çĕнтерсе пыракан ленинизм идейисен иксĕлми пуянлăхĕ.

Çав вăхăтрах И. В. Сталинăн—мирпе халăхсен телейĕн ялавне çÿлте тытса, В. И. Ленин ĕçне генилле малалла илсе пыраканăн кĕнекисем вырăсла тата пирĕн çĕршыври ытти халăхсен чĕлхисемпе пысăк тиражпа тухаççĕ. Пирĕн çĕршывра совет власĕ вăхăтĕнче кăларнă Маркс, Энгельс, Ленин, Сталин произведенийĕсен пĕтĕм тиражĕ 889 миллион экземпляр шутланаççĕ.

Ленинизм идейисем совет çыннисене коммунизм майлă воспитани памалли, Тăван çĕршыва, пирĕн халăха коммунизм çĕнтерĕвĕ патне илсе пыракан Ленин — Сталин партине чунтан-чĕререн юратма вĕрентмелли никĕс пулса тăраççĕ.

В. И. Ленин тата И. В. Сталин Сочиненийĕсем Европăри халăх демократи çĕршывĕсенче тата Китай Халăх Республикинче нумай сарăлнă. В. И. Ленин тата И. В. Сталин произведенийĕсене прогрессивлă издательствăсем пур çĕршывсенче те пичетлесе кăлараççĕ. Вĕсене тĕнчери 117 чĕлхе çине куçарса кăларнă. Ленин тата Сталин идейисем çĕр чăмăрĕн чи инçетри кĕтесĕсенчи ĕççыннисем патне çитеççĕ. Хальхи вăхăтри малта пыракан идейăсене, ленинизм идейисене пĕтĕм тĕнчипех хăватлăн сарăлса пыма нимĕнле чăрмавсемпе чарусем те кансĕрлеме пултараймĕç.

Сывă пултăр ленинизм—этемлĕхе ирĕке кăлармалли пурне те çĕнтерекен ялав!

Сывă пултăр Ленинăн—Сталинăн аслă партийĕ—«пирĕн саманан ăсĕ, чысĕ тата совеçĕ!»

Сывă пултăр никам çĕнтерейми совет халăхĕ!

Ленин ялавĕпе, Сталин хавхалантарса пынипе—малалла, коммунизмăн çĕнĕ çĕнтерĕвĕсем патне!

(Нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ. Пурте ура çине тăраççĕ. «Сывă пултăр Сталин юлташ!», «Аслă Сталина мухтав!», «Сталин юлташа урра!». «Юратнă çулпуçăмăрпа учителĕмĕре Сталин юлташа урра!». Пухура пулнисем парти гимнне—«Интернационал» юрлаççĕ. Каллех тăвăллăн алă çупаççĕ. Ленин ĕçне малалла туса пыракан аслă И. В. Сталин юлташ ячĕпе саламласа каланă сасăсем илтĕнеççĕ).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Партбюро—коллективлă ертсе пыракан орган

Иртнĕ çулталăк хушшинче «Путь социализма» колхозри пуçламăш парторганизаци колхоз производствинче малта пыракан тата обществăллă-политикăллă ĕçре хăйсене палăртнă виçĕ кандидата ВКП(б) членне илчĕ.

Парторганизаци йышĕ ÿснĕ май колхозра партбюро турăмăр. Ку вăл пирĕншĕн çĕнни пулчĕ, çавна май парторганизацие ертсе пырас ĕç меслечĕсене те улăштарса çĕнетме тиврĕ.

Пирĕн колхоз виçĕ ялти уй-хир бригадисене пĕрлештерсе тăрать. Кĕçĕн Арапуçĕпе Именкасси юнашар вырнаçнă, тепри—Люля поселокĕ—пысăк вăрман варринче, тĕп хуçалăхран 28 километрта ларать. Çак бригадăсенче кашнинчех коммунистсем пур, анчах партиллĕ вăйсем пĕр пек мар. Сăмахран, Кĕçĕн Арапуçĕнче—12 коммунист, Люляра—2 çеç. Ситменнине, Люляри коммунистсем П. Меньшикovпа А. Нестеркин юлташсем политикăллă ĕçрен вуçех пăрăнса кайнă. Вĕсене колхозниксем хушшинче ĕçлеме вĕрентекенни те пулман. Парторганизаци секретарĕ пуринчен ытларах тĕп хуçалăхра кăна ĕçлесе иртнерĕ.

Люляри бригада начар ĕçлени, унта ялхуçалăх артелĕн Уставне чăрсăррăн пăсни колхозниксене сахал мар пăшăрхантарчĕ. Люляри бригадăна çирĕплетес ыйтăва татса памалла пулчĕ. Эпир çĕннипе çав бригадăра ĕçлеме опытлă коммунист М. Земцов юлташ куçса кайрĕ. Партбюро кунпа çарăнмарĕ. Вăл Земцов юлташа колхозниксем хушшинче политикăллă воспитани ĕçне организацилеме пулăшрĕ, унăн ĕçне те тĕрĕслесех тăрать. Кун пек туни Люляри бригадăра политикăллă ĕçе лайăхлатма май пачĕ. Колхозниксен производствăллă активлăхĕ ÿсет, ялхуçалăх артель Уставне пăснă тĕслĕхсем пĕтеççĕ.

Коммунистсемпе кадрсене идейăллă-политикăллă воспитани парас ĕçе вăйлатмасăр вĕсен ертсе пырас рольне ÿстерессинчен каласма та хĕн. Иртнĕ çулта пирĕн колхозра политикăллă вĕренÿ ĕçĕ начар пынă. Ку вăл, чи малтан, контроль сителӗксĕр пулнинчен килнĕ. Политикăллă вĕренĕве организацилес тата тĕрĕслесе тăрас ĕçе партбюро членĕсем пурте хутшăнаççĕ. Эпир кашни коммунистпа тата партире тăман активпа уйрăммăн калаçусем ирттертĕмĕр.

Бюро коллективлă ĕçлени вĕренĕве ăнăçлă пуçласа яма çеç мар, кунтан та ытларах, мĕнпур коммунистсемпе кадрсен идейăллă ÿсĕмне сăнаса тăма май парать. Халĕ пирĕн колхозра 17 çын политшкула, 11 çын—«ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕренмелли кружока, 11 çын—Ленинпа Сталин биографийĕсене вĕренмелли кружока çÿреççĕ. Ертсе пыракан вырăнти 5 работник харпăр хăй тĕллĕн вĕренет.

Коммунистсемпе кадрсен политикăллă вĕренĕвне лайăхлатасси çинчен партбюрора та, парти пухăвĕнче те час-часах сÿтсе яватпăр. Вĕренÿре большевикла дисциплина туса хурассишĕн уйрăмах партбюро членĕ М. Школьникова колхозница пысăк пулăшу пачĕ.

Коллективлă ертсе пыни колхозри резервсене тĕрĕссĕн уçса палăртма май парать. 1951 çулти итогсем начар мар: пирĕн колхоз кашни гектартан çĕр пăта ыхăн тĕштырă пухса кĕртрĕ, обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ăнăçлă тултарчĕ, колхозниксен пурнăçĕпе культури лайăхланчĕ. Анчах лăпланса тăма пирĕн нимĕнле сăлтав та çук. ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн кăтартăвĕсем тăрăх партин Чăваш обкомĕн VIII-мĕш пленумĕ ялти коммунистсем умне пысăк та хисеплĕ задачăсем кăларса тăратрĕ.

Çав решенисене пирĕн партбюро хăйĕн мĕнпур ĕçĕнче тĕп вырăна хучĕ. Тырпул тухăçне гектар пуçне 100 пăтран иртерме, обществăллă выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстерме пирĕн резервсем пур-и?. Пур, анчах вĕсем çине эпир сахал пăхнă. Куçа курăнакан резервсенех илĕпĕр.

Пирĕн хăйăрлă-тăмлă çĕр çинче тырпул тухăçне ÿстерес тесен, чи малтан, удобренисемпе ытларах усă курмалла. Чăн та, тислĕк кăлармалли плана эпир яланах иртерсе тултарнă, анчах вăл сахал, техникăллă культурăсем валли çеç çитет. Партбюро членĕсем хамăр тавраpах, Пăла шывĕ тăрăхĕнче, торф пуррине тĕпчесе пĕлме сĕнчĕç. Шырарĕç те тупрĕç. Кун хыççăн правлени торф хатĕрлес ĕçе организацилерĕ. Кунпа пĕрлех эпир 1952 çултан тытăнса минераллă удобренисемпе туллинрех усă курма, кăçал 60 тоннăран кая мар кÿрсе килме, вырăнти пур тĕрлĕ удобренисене те пĕр лавне сая ямасăр упрама кăтарту патăмăр.

Партбюро колхозри ĕç вăйĕсен резервисене тупса палăртас тĕлĕшпе те хăйĕн пуçарулăхне палăртать. Ĕç вăйĕне туллинрех усă курни колхозăн хушма хуçалăхĕсене вăйлатма май пачĕ. 1951 çулта пирĕн колхоз 53 пин хĕртнĕ кирпĕч хатĕрлерĕ, кайăк-кĕшĕк валли саманран стандартлă пысăк вите туса лартрĕ. Эпир 1952 çулта кирпĕчпе саманран çĕнĕрен обществăллă суртсем тума сĕнÿ тăратрăмăр. Çавăн пекех пирĕн техникăллă культурăсем, пахча çимĕçсем акса тăвасси татăклăнах лайăхланмалла.

Партбюро членĕсем колхоз производствин уйрăм отраслĕсенче тăтăшах пулни, унти коммунистсемпе кадрсен ĕçне тĕпчесе вĕренни, массăсемпе тачăрах çыхăну тытни пире парти пухăвĕсене лайăхрах хатĕрленсе ирттерме пулăшать. Парторганизаци пухăвĕсенче хамăр коллектив пурнăçĕнчи кирлĕрех ыйтусене ытларах сÿтсе явма пуçларăмăр. Çакна май коммунистсен активлăхĕ те ÿсет.

Нумай енлĕ те кăткăс ĕçсем туса иртерет колхозри партбюро. Коммунизм строительствин аслă задачисем пирĕн ĕçри ответлăха темиçе хут ÿстереççĕ, парторганизацин кĕрешÿри пултарулăхне куллен кун çивĕчлетме хушаççĕ. Çакна май эпир ВКП(б) райкомĕнчен те партбюросене ертсе пырассине лайăхлатма ыйтатпăр, кулленхи ĕçре пире ытларах пулăшу парасса кĕтетпĕр.

Большевиксен партийĕ ертсе пынипе совет халăхĕ тунă историллĕ çитĕнÿсем пире коммунизм ĕçĕшĕн тата хастарлăрах кĕрешме хавхалантараççĕ. Колхозлă ял большевикĕсем çак аслă кĕрешÿре хăйсен иксĕлми вăйне тепĕр хут чыслăн кăтартса парĕç.

Г. ЧЕРНОВ,

«Путь социализма» колхозри партбюро секретарĕ.

Первомайски районĕ.

Ферма заведующийĕн отчечĕ

ВКП(б) Ишлей райкомĕ «Знамя труда» колхозри сысна ĕрчетмелли ферма заведующийĕн Л. Бычков юлташăн отчетне итлерĕ.

Райком бюровĕ ферма ĕçĕнчи чылай ÿсĕмсене палăртрĕ. Колхоз сысна ĕрчетмелли плана ирттерсе тултарнă. Выльăхсене лайăх пăхса усраççĕ, вĕсене яланах пĕр вăхăтра тăрантараççĕ. Выльăх апачĕ хатĕрлекен кухня ĕçĕ лайăхланнă.

Колхоз фермăран иртнĕ çулта 12 пине яхăн тупăш илнĕ. Артель государствăна сысна какайĕ памалли плана çулсерен ирттерсе тултарать.

Райком бюровĕ ферма ĕçĕнчи çитменлĕхсене те кăтартса пачĕ. Фермăра çамрăк выльăхсене тăвăр витесенче усраççĕ. Çавна пула сысна çурисем вилни те пулкалать.

Политикăллă-массăллă ĕçе кирлĕ пек йĕркелемен. Ферма работникĕсем валли политикăллă ыйтусем тăрăх тата совет наукин ÿсĕмĕсем çинчен лекцисемпе докладсем сахал ирттереççĕ, малта пыракан паха опытпа çителĕксĕр паллаштараççĕ.

Колхозри пуçламăш парторганизаци ферма ĕçĕпе ытла та сахал интересленет.

Çамрăк коммунистсене воспитани парасси çинчен

ВКП(б) Тăвай райкомĕ ялхуçалăх пайĕнчи тата МТС-ри пуçламăш парторганизацисенче çамрăк коммунистсене большевикла воспитани парас ĕç мĕнле пулса пыни çинчен сÿтсе servicesе яврĕ.

Ялхуçалăх пайĕнчи пуçламăш парторганизаци çамрăк коммунистсене воспитани парас ĕçе çителĕксĕр йĕркеленĕ. Партире тăман активпа воспитани парас ĕçе те кирлĕ пек йĕркелемен.

МТС-ри парторганизацире парти членĕн кандидачĕсем чылай. Вĕсен нумайăшĕн кандидатра тăмалли стажĕ иртнĕ. Парторганизаци вĕсене партиллĕ поручениисем сахал парать.

ВКП(б) райкомĕн бюровĕ районти ялхуçалăх пайĕнчи тата МТС-ри пуçламăш парторганизацисене çамрăк коммунистсене тата партире тăман активпа воспитани парас ĕçе вăйлатмалли майсене кăтартса пачĕ.

В. ИГНАТЬЕВ.

Çĕнĕ нормăсем тăрăх

Шупашкарти лента тĕртекен фабрикăна кăçал иртнĕ çулхинчен икĕ хут ытларах продукци туса кăларма, çĕнĕ йышши лента тĕртме, çĕнĕ ĕç нормисем тăрăх ĕçлеме задани панă. Фабрикăри рабочисемпе работницăсем çĕнĕ ĕç нормисене хапăл туса йышăннă.

Халĕ кунта обязательствăсене пурнăçа кĕртессишĕн социализмлă ăмăрту вăйланса пырать. Фабрика коллективĕ график тăрăх ĕçлет. Мастер помощникĕсем В. Кудановпа А. Сарбаева юлташсем ертсе пыракан бригадăсем ĕç нормине кулленех ирттерсе тултараççĕ. Малта пыракан стахановкăсем—Т. Шелудякова, А. Зверева, А. Пирогова юлташсем çĕнĕ ĕç нормине 125—130 процент тултараççĕ.

Халăх заседателĕсен канашлăвĕ

ШĂХАСАН. Кунта халăх заседателĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура Шăхасан районĕнчи халăх судьи Васильев юлташ халăх заседателĕсен прависемпе обязанноçĕсем çинчен доклад туса пачĕ.

Районти парткабинет заведующийĕ Михайлов юлташ тĕнчери лару-тăру çинчен лекци вуларĕ.

Е. КОНДРАТЬЕВА.

Предприятисенче профсоюз активĕпе ĕçлессине вăйлатмалла

(Чăвашоблпрофсоветăн IV-мĕш пленумĕ)

Чăвашоблпрофсоветăн IV-мĕш пленумĕ «Предприятисенче профсоюз активĕпе ĕçлесси çинчен» Облпрофсовет председателĕн Ф. Романов юлташăн докладне итлесе сÿтсе яврĕ.

Республикăри предприятисенчи профсоюз организацийĕсем 30 пин активиста пĕрлештерсе тăраççĕ. Вĕсем профгруппоргсем, ĕçе сыхлакан общественнăй инспекторсемпе страхделегатсем, общественнăй контролерсем е профсоюз организацийĕсенче ытти общественнăй ĕçсене тăвакансем. Кунсăр пуçне, тĕрлĕ комиссисен ĕçне вуншар пин профсоюз членĕсене хутшăнтарнă.

Докладчик Ф. Романов юлташ актив профсоюз ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе нумай пулăшу пани çинчен калакан тĕслĕхсем илсе кăтартрĕ.

Анчах та профсоюзсен вырăнти, фабрикăсемпе заводсенчи, облаçри комитечĕсен ĕçĕсенче нумай çитменлĕхсем пурха. Профсоюзсен чылай обкомĕсенче, фабрикăсемпе заводсенчи, вырăнти тата цехсенчи комитечĕсенче комиссисем кирлĕ пек ĕçлемеççĕ. Чылай предприятисенчи профсоюз организацийĕсенче профгруппоргсемпе общественнăй инспекторсен тата страховой делегатсен ĕçне тивĕçлипе йĕркелемен. Вĕсенчен хăшпĕрисем хут çинче кăна шутланса тăраççĕ.

Çав çитменлĕх[illegible]м обкомсем, фабрикăсемпе заводсенчи тата вырăнти комитетсем профсоюз активĕн ĕçне кирлĕ пек ертсе пыманнинчен килнĕ. Профсоюз комитечĕсенчен чылайăшĕ актива вĕрентмеççĕ, унăн ĕçне тĕрĕслесе тăмаççĕ, лайăх ĕçлекен активистсен опытне сарса пымаççĕ.

Вăрман ĕçлекен тата сулă юхтаракан рабочисен профсоюз обкомĕ хăйĕн активне тĕплĕ пĕлмест.

Канашри вагонсем юсакан заводри профсоюз комитечĕ комиссисен ĕçне ертсе пымасть. Çавна пула комиссисем ĕçлеме пăрахнă. Шупашкарти пир-авăр фабрикинчи фабком çинчен те çавнах калама. Фабрика комитечĕ 1951 çул тăршшĕнче комиссисен составне те çирĕплетмен. Декабрь уйăхĕнче профсоюз организацийĕн отчетпа суйлав конференцийĕ пулса иртрĕ. Анчах паянхи куна çитсе те яланхи комиссисем туман. Шоссесемпе гидротехника строительствинчи рабочисен профсоюз обкомĕ те комиссисемпе общественнăй инспекторсен ĕçĕпе интересленмест.

ВЦСПС-ăн VII-мĕш пленумĕ центральнăй, республикăсенчи, крайсемпе облаçсенчи тата фабрикăсемпе заводсенчи комитетсене, профсоюз совечĕсене активпа ĕçлессине вăйлатма кирлине кăтартса пачĕ. Нумаях пулмасть вырăнти профсоюз организацийĕсенче суйлавсем пулса иртрĕç. Фабрикăсемпе заводсенчи комитетсен çĕнĕрен суйланă комиссисен составне халех çирĕплетес пулать. Комиссисене мĕн-мĕн тума кирлине тĕплĕн ăнлантарса пани кирлĕ. Комитетсемпе комисси членĕсене ĕç пана чухне кашни сыннăн пĕлĕвне, опытне тата кăмăлне шута илмелле.

Профсоюз группинсен, цехсенчи, фабрикăсемпе заводсенчи комитетсен предприяти коллективĕсене социализмлă ăмăртура çĕнтерÿсем тума мобилизацилемелле. Профсоюз активĕн ĕçне вăйлатни предприятие ĕç планĕсене тултарма тата иртте.рсе тултарма, продукци пахалăхне лайăхлатма, чĕртаварпа материала перекетлеме, продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетме, шалти мĕнпур резервсемпе туллиех усă курма пулăштăр. Группăсемпе комиссисем, цехсенчи тата фабрикăсемпе заводсенчи комитетсем коллективлă договорти обязательствăсем мĕнле пурнăçа кĕнине тăтăшах тĕрĕслемелле.

Çĕннишĕн кĕрешесси, предприятире малта пыракан опыта анлă сарасси—профсоюз организацийĕсен тивĕçĕ пулса тăрать. Çак задачăна актив çине таянса ĕçлесен кăна ăнăçлă пурнăçлама пулать.

Профсоюз активне воспитани парас ĕçре канашлусем тăтăшах иртterни, актив ĕçĕнчи лайăх опыта тĕпчесе вĕренсе ăна ытти активистсем патне çитерни нумай вырăн йышăнса тăрать. Хăшпĕр профсоюз обкомĕсемпе фабзавкомсем тата вырăнти комитетсем ку тĕлĕшпе лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Сăмахран, сыхăну работникĕсен профсоюз обкомĕпе потребкооперации работникĕсен обкомĕ актив канашлăвĕсене час-часах ирттереççĕ.

Анчах та чылай профсоюз обкомĕсемпе фабзавкомсем çак меслетпе кирлĕ пек усă курмаççĕ. Профсоюз обкомĕн работникĕсем актив умĕнче сайра-хутра кăна докладсем тăваççĕ. Обкомсемпе фабзавкомсенчен нумайăшĕ хăйсен ларăвĕсенче комиссисемпе профгруппоргсен, общественнăй инспекторсен, страховой делегатсен ĕçĕсем çинчен отчетсем итлемеççĕ, малта пыракан опыта сармаççĕ.

Çăнăх авăртакан промышленноçпа элеваторсенче ĕçлекен рабочисен профсоюз обкомĕ, ВЦСПС президиумĕ «Профсоюз групписен ĕçĕсем çинчен» йышăннă решение сÿтсе явса, вырăнти комитетсене профгруппăсене ертсе пырас ĕçе [illegible]лайăхлатма хушнă. Анчах та профсоюз обкомĕ хăйĕн ларăвĕнче пĕр профгруппорг отчетне те итлемен, вĕсемпе канашлусем ирттермен. Çавăн пекех государство учрежденийĕсенче ĕçлекенсен профсоюз обкомĕ те активпа канашлусем ирттермест.

Профсоюз обкомĕсен работникĕсем предприятисенче сахал пулаççĕ, вырăнта пулсан та фабзавкомсемпе вырăнти комитетсене çителĕклĕ таран пулăшмаççĕ.

Профсоюз активĕ марксистла-ленинла теорипе лайăх хĕçпăшалланнсан кăна хăйĕн умĕнче тăракан чыслă тивĕçе лайăх пурнăçлама пултарать. Çавăнпа та профсоюз органĕсен активăн политикăллă пĕлĕвне куллен ÿстерсе пыма тăрăшмалла.

Кадрсен политикăллă пĕлĕвне тата квалификацине ÿстерес ĕçре лекциллĕ пропаганда нумай вырăн йышăнса тăрать. 1951 çулта рабочисемпе служащисем валли профсоюз обкомĕсен вăйĕпе 447 лекци тата профсоюз Совечĕн вăйĕпе 32 лекци ирттернĕ. Профсоюз членĕсем валли вуланă лекцисем хушшинче профсоюз историйĕ çинчен, социализмлă производствăн экономикипе техники çинчен калакан темăсем сахал.

ВЦСПС-ăн VII-мĕш пленумĕ центральнăй, облаçсенчи тата вырăнти комитетсене профсоюз кадрĕсене вĕрентмелли курссемпе семинарсене лайăх йĕркелеме тата вĕренÿ пахалăхне куллен лайăхлатма хушать. Профсоюз организацийĕсен çак кăтартăва тĕплĕ пурнăçласа пымалла.

Ф. Романов юлташ доклачĕ тăрăх прение пурĕ 13 çын тухса каларĕ. Тухса калакан юлташсенчен чылайăшĕ профсоюз активне воспитани пани рабочисен социализмлă ăмăртăвне йĕркелесе ертсе пырас ĕçре нумай пулăшу панине палăртрĕç, профсоюз обкомĕсемпе облпрофсовет ĕçĕнчи çитменлĕхсене критикăларĕç.

Çăнăх авăртакан промышленноçпа элеваторсенче ĕçлекен рабочисен профсоюз обкомĕн председателĕ Соловьева юлташ профсоюз активне воспитани пани чылай участоксенче ÿсĕмсем тума пулăшни çинчен калать. Обком ĕçĕнче нумай çитменлĕхсем пур. Профсоюз обкомĕ канашлусем ытла та сахал ирттерет. Активистсене пĕр-пĕрин опычĕпе паллаштарас ĕçе çителĕксĕр йĕркеленĕ. Соловьева юлташ кунпа пĕрлех сыхăну работникĕсен профсоюз обкомĕн ĕçĕнчи çитменлĕхсене те палăртрĕ.

Шосгидротехстрой работникĕсен профсоюз обкомĕн председателĕ Алексеев юлташ ВЦСПС-ăн VII-мĕш пленумĕ йышăннă решение пурнăçа кĕртмелли майсем çинчен калать.

— Облпрофсовет профсоюз организацийĕсен ĕçне ытла та сахал пĕтĕçтерет, лайăх ĕçлекен профсоюз организацийĕсен опытне ытти организацисем патне çитерес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлет. Сентябрь уйăхĕнче Канашра профсоюз активĕн канашлăвне ирттернĕччĕ. Анчах та унта социализмлă ăмăртăва ертсе пырасси, культурăллă-массăллă ĕçе йĕркелесси тата ытти практикăра кирлĕ ыйтусене хускатмарĕç,—тет финанспа банк работникĕсен профсоюз обкомĕн председателĕ Обухова юлташ.

Вăрман ĕçлекенсемпе сулă юхтаракан рабочисен профсоюз обкомĕн председателĕ Ильин юлташ, ĕçри çитменлĕхсене палăртнипе пĕрлех, Облпрофсовета культурăпа çутĕç работникĕсене вăрман ĕçлекенсем хушшинче культурăллă-массăллă ĕçе ытларах хутшăнтармалла тума сĕнет.

Шупашкарти Водосвет трестĕнчи завком председателĕ Кузьмин юлташ завод комитечĕн çĕнĕ составĕ ВЦСПС-ăн VII-мĕш пленумĕ пулса иртнĕ хыççăн профактивпа мĕнле ĕçсем туни çинчен каларĕ. Завком профсоюз организацийĕн активĕпе. группоргсемпе тата страховой делегатсемпе инструктивлă канашлу ирттернĕ. Профсоюз активисчĕсене хăйсен тивĕçĕсемпе тĕплĕ паллаштарнă. Комитет членĕсем IV-мĕш кварталти социализмлă ăмăртăвăн итогне тунă.

— Облпрофсовет çамрăк кадрсене вĕрентес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлет,—тет Краснова юлташ.—Акă, эпĕ пĕр çулталăка яхăн сыхăну работникĕсен обкомĕн председателĕ пулса ĕçлетĕп. Ĕç планĕсене те, обком ларăвĕн протоколĕсене те Облпрофсовета вăхăтра тăрататпăр. Анчах та вĕсем тăрăх пире никам та кăтарту парабан çук.

Сĕктер комбинатĕнчи профсоюз завкомĕн председателĕ Асадулин юлташ Облпрофсовет работникĕсем профорганизацисен ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе вырăнсенче сахал пулăшу пани çинчен калать. Прение çавăн пекех Светлов (Çĕрĕç органĕсемпе МТС работникĕсен профсоюз обкомĕн председателĕ), Михайлов (Атăл леш енчи электростанцири завком председателĕ), Янутkин (Облпрофсовет членĕ), Алексеев (Облпрофсовет çумĕнчи профкабинет заведующийĕ), Ветвинский (Улатăр деповĕнчи завком председателĕ), Иванов (1-мĕш номерлĕ трестри постройком председателĕ) юлташсем тухса каларĕç.

Юлашкинчен республикăри профсоюз организацийĕсем умĕнче тăракан задачăсем çинчен ВЦСПС инспекторĕ Кузьменко юлташ сăмах каларĕ.

Облпрофсовет пленумĕ актива воспитани парас тĕлĕшпе анлă решени йышăнчĕ.

Районти хаçатсенчен

Тухăçлă тырпулшăн

Куславкка районĕнчи чылай колхозсем хĕрсех суракине хатĕрленеççĕ. «Правда», «Динамо», «Красная Чувашия» колхозсем сураки валли вăрлăх çителĕклĕ хатĕрленĕ, сортласа хунă. Колхозниксем ялхуçалăх машинисене юсас, вырăнти удобренисем пухас, хирте юр тытса хăварас тĕлĕшпе те хастарлă ĕçлеççĕ.

«Правда» колхоз членĕсем уй-хире 2.000 лав тислĕк кăларчĕç, 12 центнер кĕл, 26 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухрĕç. **(«Ленин ялавĕпе»).**

Государство пулăшăвĕ

Иртнĕ çулта Элĕк районĕнчи социальнăй обеспечени пайĕ вăрçăра вилнĕ çар сыннисен çемйисене 1.313.806 тенкĕ, вăрçă инвалидĕсене 301.643 тенкĕ, çар сыннисен çемйисене 2.996 тенкĕ пенси тата пособи панă.

Кусемсĕр пуçне, ĕç инвалидĕсене, ĕçлейми пулнă ватă çынсене 125.377 тенкĕ, нумай çул хушши ĕçленĕ врачсемпе учительсене 86.537 тенкĕ пенси укçи панă. **(«Колхоз хаçачĕ»).**

Малта пыракан опыта вĕренеççĕ

Октябрьски районĕнчи Чăнкасси ялĕнчи колхозниксем Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ, Социализмлă Ĕç Геройĕ С. К. Коротков юлташ вăйлă тырпул туса илмелли майсем çинчен çырнă статьяна вĕренеççĕ. Колхозниксем вăл статьяна тимлĕ вĕренсе нумай тухăçлă тырпул ÿстерессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. **(«Хĕрлĕ Октябрь»).**

Планран ирттерсе вăрман хатĕрлеççĕ

Канаш районĕнчи Маленков ячĕпе тăракан колхоз членĕсем вăрман хатĕрлемелли плана срокчен тултарма илнĕ обязательствăна чыслă пурнăçларĕç, вăрман касса хатĕрлемелли тата турттармалли плана çĕнĕ çул тĕлне ирттерсе тултарчĕç.

Вăрман хатĕрлевĕнче уйрăмах комсомолецсемпе çамрăксем тăрăшса ĕçлеççĕ. М. Никифоров, П. Краснов, П. Русков, А. Кузьмин, П. Баранов, М. Петров юлташсем, стахановла вахтăна тăрса, кулленхи нормăна 2—3 хут тултараççĕ. **(«Коммунизмшăн»).**

„Тăван Атăл“ альманахăн 4 (41)-мĕш кĕнеки

Çак кунсенче Чăваш совет писателĕсен союзĕ кăларакан «Тăван Атăл» альманахăн 1951 çулхи тăваттăмĕш кĕнеки пичетленсе тухнă.

Кĕнеке Сталинла премин лауреачĕ Степан Щипачев çырнă «Павлик Морозов» ятлă поэмăпа пуçланать. Ку поэмăна вырăсларан Н. Евстафьев куçарнă.

В. Алагер çырнă «Виçĕ хĕр» ятлă виçĕ пайлă пьесăна кĕртнĕ. Пьесăна колхоз театрĕсемпе драмкружоксем валли çырнă.

Кĕнекере Хветĕр Уяр çырнă «Пăлхав» ятлă произведенин иккĕмĕш пайĕ нумай вырăн йышăнать.

Вырăссен аслă писателĕ Н. В. Гоголь вилнĕренпе 100 çул çитнĕ май, альманахра Н. В. Гоголь çырнă «Диканька çывăхĕнчи хуторти каçсем» сборникрен илнĕ «Хаяр тавăру» ятлă произведение пичетленĕ.

Иласкинпа Н. Любимов çырнă «Чăваш литератури чĕлхин хăшпĕр ыйтăвĕсем пирки» ятлă статьяна «Тăван Атăл» альманахăн тăваттăмĕш кĕнеки вĕçленет.

Тĕнчери халăхсем В. И. Ленина хисеплесе асăнаççĕ

Польша

ВАРШАВА, январĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Владимир Ильич Ленин 1913—1914 çулсенче Поронино ялĕнче пурăннă, унта ĕçленĕ. Çав яла халĕ Польша ĕççыннисем йышлăн пырса кураççĕ. Унта В. И. Ленин музейне уçнă. Ку музее иртнĕ çулталăкра Польша халăхĕн тĕрлĕ сийĕсен представителĕсем пĕтĕмпе 120 пин çын ытла пырса курнă. Халĕ, Ленин кунĕсенче, музее курма пыракансем татах та нумайрах.

Ĕлĕк Владимир Ильич организациленĕ парти шкулĕ пулнă пĕчĕк çурт-музее курма пыракансем питĕ тимлĕ тата юратса пăхса тухаççĕ. Унта вилĕмсĕр Ленинăн пурнăçĕпе тата ĕçĕсемпе паллаштаракан япаласене пухнă. Музейре Сталин самаипе кăтартакан уйрăм тунă.

Отзывсен кĕнеки çинче тĕнчери нумай халăхсен чĕлхисемпе çырса хунă çырусем пур, сакă ĕççыннисем В. И. Ленина чунтан-чĕререн юратни çинчен калать.

Чехословаки

ПРАГА, январĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Чехословакири пур хаçатсем те Владимир Ильич Ленина асăнса çырнă материалсене пичетлесе кăларнă. Хаçатсем çине В. И. Ленин портречĕсене, ленинизм чаплă çĕнтерÿ туни çинчен çырнă статьясене, аслă çулпуç çинчен аса илсе çырнисене, илемлĕ произведенисенчи аслă çулпуç çинчен çырнă сыпăксене, Ленин кунĕсене Совет Союзĕнче, халăх демократи çĕршывĕсенче тата капитализмлă çĕршывсенче мĕнле ирттерни çинчен пĕлтерекен хыпарсене пичетленĕ.

«Руде право» хаçат «Ленинизм çĕнтерĕвĕ» ятлă умстатьяра çапла çырать. Пĕтĕм тĕнчери пролетариатăн ирĕклĕхшĕн пыракан кĕрешĕвĕнче çĕнĕ самана пуçланни, капитализмлă тĕнче пĕтсе пыма пуçланă, çĕнĕ тĕнче, социализмлă тĕнче суралнă самана, пĕтĕм этемлĕхĕн историйĕнчи чаплă самана, ленинизм çĕнтерсе пыракан самана пуçланни аслă Ленин ячĕпе тачă çыхăнса тăрать. Пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисем ленинизм ялавĕ айĕнче, Ленин çулĕпе çирĕп пыракан аслă çын—Иосиф Виссарионович Сталин ертсе пынипе, миршĕн, демократишĕн тата социализмшăн кĕрешес ĕçре çултан-çул çĕнĕ çĕнтерÿсем туса пынине куратпăр.

Ленин панă кăтартусем тăрăх ĕçлесе, Чехословакири коммунистсен партийĕ çĕнĕ çитĕнÿсем туса пырать. Ленинизм теорийĕпе практики пирĕн партие халăх демократи стройне туса хумалли, çĕнĕ, социализмлă государство туса пымалли çул-йĕре кăтартса пачĕç, тесе çырать хаçат.

Ленин социализмăн экономикăллă никĕсĕсене тăвасси çинчен вĕрентни, Ленинпа Сталинăн çĕршыва социализмла индустриализацилемелли тата коллективизацилемелли принципĕ пирĕн партишĕн хамăр çĕршывра социализм тăвас ĕçре малалла кайса пымалли шанчăклă компас пулса тăрать.

Ленинизм вăл мир ялавĕ, халăхсем пĕр-пĕрипе тăванла килĕштерсе ĕçлесе пурăнмалли ялав пулса тăрать. Ленинизм пирĕн партие тĕнчери çĕршывсем хушшинчи сыхăнусене тытса пырас ĕçре тĕрĕс çул-йĕр кăтартса парать, тесе çырать малалла «Руде право» хаçат. Пирĕн партипе правительствăн тулашри политикинче хамăр çĕршывпа аслă Совет Союзĕ пĕр-пĕрипе яланах туслă пурăнмалли никĕс тĕп вырăнта, çак политика вăл мире сыхласа хăварассишĕн, çĕнĕ вăрçă пуçарма хĕтĕртекен империалистсене хирĕç яланах активлă кĕрешесси пулса тăрать, тесе çырать хаçат.

Болгари

СОФИЯ, январĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Болгарире пур çĕрте те—фабрикăсемпе заводсенче, çĕнĕ стройкăсенче, çĕрĕç кооперативĕсенче, государствăн ялти хуçалăхĕсенче В. И. Ленина асăнса хурлăхлă-чаплă пухусем ирттереççĕ. Болгарири ĕççыннисем хăйсем аслă Ленина тата унăн ĕçне малалла илсе пыракана, пĕтĕм прогрессивнăй этемлĕхĕн çулпуçĕпе учительне И. В. Сталина ăшă кăмăлпа чунтан-чĕререн юратнине палăртаççĕ, Совет Союзĕпе туслă пурăннине куç шăрçине сыхланă пекех сыхласа усрама тупа тăваççĕ. Ĕççыннисем Болгарире социализм никĕсĕсене хывас ĕçе хăвăртлатма, никам çĕнтерейми Совет Союзĕпе генилле Сталин ертсе пыракан демократиллĕ мир лагерьне тĕреклетме тăрăшса производствăра çĕнĕ çитĕнÿсем тума обязательствăсем илеççĕ.

Болгарири хаçатсем паян большевиксен партийĕпе Совет государствине туса хунă Владимир Ильич Ленин çинчен статьясем, очерксем, калавсем нумай пичетленĕ. Çавăн пекех хаçатсем В. И. Ленинăн революциллĕ ĕçĕсемпе паллаштаракан документсемпе фотоÿкерчĕксене пичетлесе кăларнă.

Демократиллĕ Германи Республики

БЕРЛИН, январĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Германи Республикинчи халăх ĕççыннисен аслă çулпуçĕ В. И. Ленин вилнĕренпе 28 çул тултарнине палăртать. Республикăри предприятисемпе учрежденисенче В. И. Ленин çинчен докладсем тăваççĕ. Кинотеатрсенче «Владимир Ильич Ленин» ятлă документлă фильм, «Ленин в Октябре», «Человек с ружьем» ятлă тата ытти илемлĕ фильмсене кăтартаççĕ.

«Нейес Дейчланд» хаçат Вильгельм Пик статьине пичетленĕ. Вăл В. И. Ленин пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен çырнă статьяна «Ленин—миршĕн кĕрешекен аслă паттăр» тесе ят панă. Ленинăн наукăллă теорине, Сталин малалла аталантарса пынă теорие никĕсе хурса, Совет Союзĕ яланах мирлĕ политика тытса пырать, тесе çырать Пик. Ленин ĕçне малалла генилле туса пыракан, миршĕн кĕрешес ĕçĕн чаплă стратегĕ вăл Сталин пулса тăрать. Ленинла-сталинла мирлĕ политикăна нимĕç халăхĕ тĕлĕшпе пурнăçласа пыни Германири мир лагерĕн вăйĕсене малалла кĕрешме хавхалантарать, халăхăн анларах та анларах сийĕсем Совет Союзĕпе туслă пурăнма кирлине, Совет Союзĕпе туслă пурăнни кăна мирлĕ пурнăç тата телейлĕ пурнăç тума шанчăк панине ĕненсе пыраççĕ.

Финлянди

ХЕЛЬСИНКИ, январĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Хельсинки хулинче большевиксен партийĕпе Совет государствине туса хунă аслă çынна, тĕнчери пролетариатăн гениллĕ çулпуçне Владимир Ильич Ленина асăнса хурлăхлă чаплă пуху ирттернĕ. Ăна «Финлянди—Совет Союзĕ» обществин Нюланд округĕнчи организацийĕ пухнă.

Голланди

ГААГА, январĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Голландири ĕççыннисем этемлĕхĕн аслă генийне Владимир Ильич Ленина чунтан-чĕререн асăнса пурăнаççĕ. Çак кунсенче Голландири нумай предприятисенче В. И. Ленин вилнĕренпе 28 çул тултарни çинчен докладсемпе каласусем ирттереççĕ.

«Де Ваархейд» хаçат çапла çырать: «Владимир Ильич Ленин совет халăхне питĕ чаплă идейăллă пуянлăх парса хăварнă, çакă вăл—аслăлăх çăлкуçĕ тата пуян пурнăç тумалли хăватлă çăлкуç, хăйсен вăйне тата социализмлă строя никам çĕнтерме пултарас çуккине ĕненсе тăмалли çăлкуç. Ленин—питĕ чаплă та аслă çын! Кун çинчен Голландири кашни ĕççынни пĕлет, çавăнпа та пур ĕççыннисем те январь уйăхĕн çак кунсенче этемлĕх генийне хисеплесе асăнаççĕ».

Ленин кунĕсене ирттернĕ май çĕршывра Владимир Ильич Ленинăн произведенийĕсене туянакансем нумайланнă.

Уругвай

МОНТЕВИДЕО, январĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Большевиксен партийĕпе Совет государствине туса хунă Владимир Ильич Ленин вилнĕренпе 28 çул тултарни çинчен Уругвайри «Хустисия» хаçат статьясемпе материалсем чылай пичетленĕ.

«Ленин тата Мир» ятлă статьяра хаçат: ленинизмăн никам çĕнтерейми ялавĕ айĕнче, И. В. Сталин гениллĕ ертсе пынипе, пĕтĕм çĕр чăмăрĕ çинчи миллионшар ĕççыннисемпе хĕрарăмсем этемлĕхĕн ĕмĕрхи шухăш-ĕмĕчĕсене пурнăçлаççĕ. Вĕсем çирĕп миршĕн, ирĕклĕхшĕн тата прогресшăн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешеççĕ, тесе çырать.

«Ленин тата рабочисен юхăмĕнчи экономистсене хирĕç мынă кĕрешÿ» ятлă статьяра хаçат революциллĕ движенишĕн сиенлĕ юхăма—экономизма идея енĕпе аркатса тăкассишĕн кĕрешес ĕçре В. И. Ленин питĕ нумай ĕç тунине палăртать. Январĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа Уругвайри тĕрлĕ хуласенче В. И. Ленин вилнĕренпе 28 çул тултарнине асăнса хурлăхлă-чаплă пухусемпе ларусем ирттерме палăртнă.

Январĕн 21-мĕшĕнче Уругвайри коммунистсен партийĕ организацийĕсемпе хурлăхлă-чаплă лару пулать.

Вăрман хатĕрлевĕ

Ĕç тухăçлăхне ÿстерессишĕн

Элĕк районĕнчи «Красный Октябрь», «Правда» колхозсем йывăç касса хатĕрлемелли плана ирттерсе тултарчĕç. Калинин ячĕпе, Молотов ячĕпе тăракан колхозсем каснă йывăça çул хĕррине илсе тухмалли тата турттармалли плана тултарнă. Халĕ вĕсем планран ирттерсе турттараççĕ. Асăннă колхозсенчи парторганизацисем колхозниксене государство заданине чыслă пурнăçлама мобилизациллеççĕ. «Правда» колхозри парторганизаци вăрманта ĕçлеме чылай коммунистсене уйăрнă. Колхозниксене колхоз председателĕн заместителĕ, коммунист В. Лисин юлташ ертсе пырать. Парторганизаци секретарĕ Н. Яхваров юлташ вăрманта ĕçсем мĕнле пынипе куллен интересленет.

Молотов ячĕпе тăракан колхоз председателĕн заместителĕ коммунист Г. Виноградов юлташ парторганизаци хушнипе вăрман турттаракансен бригадине ертсе пырать. «Сталинград» колхозри парторганизаци секретарĕ Ф. Михайлов юлташ йывăç касса хатĕрлекен бригадăна ертсе пырать. Шверник ячĕпе тăракан колхозри партбюро членĕ Гурьев юлташ вăрман турттаракансен бригадине ертсе пырать. Парторганизацисем лайăх ертсе пыракан колхозсенче вăрман хатĕрлес ĕç ăнăçлă пырать.

Районти чылай колхоз руководителĕсемпе парторганизаци секретарĕсем Сталин юлташ умĕнче йышăннă обязательствăна чыслă пурнăçлассишĕн кирлĕ пек кĕрешмеççĕ. Район, пĕтĕмĕшпе илсен, каснă йывăça турттарса кăларас тĕлĕшпе юлса пырать.

Январĕн 1-мĕшĕпе 10-мĕшĕ хушшинче районти колхозниксем вăтам шутпа кулленех пĕрер фестметр та касса хатĕрлеймен, урăхла каласан, ĕç нормине çурри те тултарайман. Лавçăсем те ĕç нормине тултараймаççĕ. Çав хушăрах малта пыракан бригадăсем куллен кашни çын пуçне 2—3 фестметр касса хатĕрлеççĕ, 4—5 фестметр турттарса кăлараççĕ, 10—12 фестметр çул хĕррине илсе тухаççĕ.

Пăрачкав вăрманпромхозĕн Никольски вăрман участок руководителĕсем çав лайăх тĕслĕхсене сарма тăрăшмаççĕ. Мастерсем колхозниксене ĕçе тĕрĕс йĕркелеме, инструментсемпе лайăх усă курма пулăшмаççĕ. Уйрăм бригадăсенче дисциплина япăх, социализмлă ăмăртăва йĕркелемен. Суворов ячĕпе тăракан колхоз лавçисем январĕн 10-мĕшĕнче 22 лавпа 2,5 километртан пурĕ те 12,1 фестметр йывăç çул хĕррине илсе тухнă. Çав кунах Молотов ячĕпе тăракан колхозри Н. Фадеевпа Ф. Кошкин юлташсем 6 хут хутласа 6-шар фестметр илсе тухнă.

«Дружба» колхоз членĕсем Никольски, Старо Каменнăй тата Красноглуховски ялсенче вырнаçнă. Укçа илес, лашасем валли сĕлĕ илес е тата ытти ĕçсем тăвас пулсан пĕр колхозранах виçĕ çын, виçĕ лавпа çÿрет.

Подсанкăсемпе йывăç турттаракансем икĕ хут ытларах тиеççĕ. Лашасем сăмăл туртаççĕ. Подсанкăпе турттарни лавçăсен ĕç тухăçлăхне ÿстернине Пăрачкав вăрманпромхоз директорĕ Федоров юлташ пĕлмест темелле мар. Анчах вăл колхоз лавçисем валли подсанкăсем хатĕрлеттерсе хуман, халĕ те тумаççĕ. Нумай лавçăсем çав-çавах подсанкăсăр турттараççĕ.

Колхозсенчен апат-çимĕç, выльăх апачĕ, улăштарса тăхăнма çипуç вăхăтра леççе паман пирки колхозниксен хĕрсе ĕçленĕ çĕртенех киле пăрахса таврăнма тивет. Кайса килессипе çул çинче пĕр эрне ытла иртет.

Хăшпĕр колхозсенчи парторганизаци секретарĕсем вăрман хатĕрлевĕнчен аякра тăраççĕ. «Молния», «Красная заря», Куйбышев ячĕпе тăракан колхозсенчи парторганизацисенче государство заданине пурнăçласси çинчен коммунистсем пĕрлехи пухăвĕсенче йăлишĕн çеç сÿтсе явнă. Асăннă парто[illegible]анизацисем вăрмана пĕр коммунист та [illegible]н. «Молния» колхоз председателĕн [illegible]аместителĕ коммунист Мурзаев юлташ—пÿрне[illegible]ыратать, тесе вăрмана каяссинчен пăрăнса тăрать. Нумаях пулмасть ку [illegible]колхозран йывăç касма 6 хĕрача янă. Вĕсенчен пĕри те хал[illegible] вăрманта ĕçлемен. Мастер йышăнм[illegible]пирки хĕрачасем ĕçлемесĕрех килĕс[illegible]врăннă.

Тяботин мастерпа Кузьминов приемщик колхозниксене тухăçлă ĕçлеме лайăх майсем туса пама тăр[illegible]ма[illegible]. Хăшпĕр чухне пĕ[illegible]ене купалама вырă[illegible] суккн, тепĕр чухне—хатĕрленĕ йывăça çийĕнчех йышăнманни чăрмантарать. Вĕсем ĕçе вăхăтра тухмаççĕ, [illegible] мĕн чухлĕ йывăç хатĕрленине шута тĕрĕс илмеççĕ. Дlittрпев мастерпа унăн помощникĕсем С. Семеновпа М. Семенов юлташсем хăйсен ĕçне лайăх туса пыраççĕ. Ĕçе куллен шута илеççĕ, колхозниксене тухăçлă ĕçлемелли майсем çинчен каласа ăнлантараççĕ. Анчах вĕсен опычĕпе ытти мастерсене паллаштармаççĕ.

Ĕç тухăçлăхĕ нумай пултăр, вăл яланах ÿссе пытăр тесен массăллă ĕçе йĕркелени, колхозниксен культурăпа пăлă условийĕсене лайăхлатни кирлĕ. Никольски вăрман участокра ĕç ку енчен те çителĕксĕр тăрать. Вăрман участок территорийĕнче икĕ лавкка пур. Пĕри—райсоюзăн, тепри—ОРС-ăн. Лавккасенче куллен кирлĕ япаласем—краççын, табак, конфет, сахăр сайра хутра çеç пулкалать.

Вăрманта ĕçлекен колхозниксем хаçат курса вулаймаççĕ. Январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа январĕн 10-мĕшне çитиччен Никольски ялĕнчи почтальон ĕçлемерĕ. Вулав çурчĕ хупăнса тăчĕ. Пăрачкав вăрманпромхоз директорĕн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ Евграфов юлташ колхозниксем валли лекцисемпе докладсем организацилемест, агитаторсене куллен пулăшмасть, социализмлă ăмăртăва йĕркелеме пулăшмасть.

Аслă çулпуçăмăрпа учителĕмĕр умĕнче йышăннă обязательствăна пурнăçлас тесен колхоз руководителĕсемпе пуçламăш парторганизаци секретарĕсен вăрмана ĕç вăйĕ тата лавсем çителĕклĕ уйăрса яма тăрăшмалла, колхозниксене ертсе пыма ответлă çынсем уйăрмалла. Бригадирсен мастерсемпе пĕрле колхозниксен ĕçне тĕрĕс йĕркелемелле, малта пыракансен опычĕпе паллаштармалла.

Юлашки кунсенче ВКП(б) Элĕк райкомĕпе райсовет исполкомĕ колхозниксене кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра йывăç хатĕрлемелли плана ăнăçлă тултарма мобилизацилес тĕлĕшпе чылай организациллĕ-массăллă ĕçсем туса ирттерчĕç. Агитаторсемпе пропагандистсем, районти партипе совет активĕ колхозниксене йывăç халăх хуçалăхне мĕн тери кирли, вăрман хатĕрлекенсене ĕç укçи мĕн чухлĕ тÿлени, тĕнчери лару-тăру çинчен ăнлантарса параççĕ. Чылай колхозсем вăрмана çурран ĕçлекенсемпе лавсем хушса яраççĕ. Парторганизаци ертсе пынипе районти колхозниксемпе колхозницăсем аслă çулпуçăмăрпа учителĕмĕр И. В. Сталин юлташ умĕнче йышăннă обязательствăпа чыслă пурнăçлĕç

С. ДУБИНИН,
ВКП(б) Элĕк райкомĕн секретарĕ.

ООН Генеральнăй ассамблейин улттăмĕш сессийĕ

Политика комитечĕ Пĕрлешнĕ нацисен организацине çĕнĕ членсем илес ыйтăва сÿтсе явма тытăннă

ПАРИЖ, январĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС спецкорр). Паян Политика комитечĕ кун йĕркинчи черетри ыйтăва—Пĕрлешнĕ нацисен организацине çĕнĕ членсем илес ыйтăва пăхса тухма тытăннă. Çакă вăл çĕнĕ ыйту мар. Фашистла агрессорсен тапăннинчен чи малтан инкек курнă, фашистла агрессие хирĕç паттăр кĕрешнĕ Албани ултă çул каялла, 1946 çулхи январьте, ООН членне илме ыйтса заявлени панă.

Японие хирĕç вăрçа активлă хутшăннă тата фашистла агрессорсене хирĕç Европăра вăрçнă çĕрте те пулăшнă Монголи Халăх Республики 1946 çултах ООН членне илме ыйтса заявлени панă.

1947 çулта Болгари, Венгри тата Румыни ООН членне илме ыйтса заявлени панă. Çав çĕршывсенчи халăхсем хăйсем курайман фашистла влаçсене сирпĕтерсе антарнă, гитлерла Германие хирĕç вăрçа активлă хутшăннă, фашистла агрессорсене аркатса тăкма нумай пулăшнă. Ку çĕршывсенче халăхсем хăйсен çĕршывĕсенче чăн-чăн демократи стройĕсене туса хучĕç, мире юратакан государствăсен ретне тăчĕç.

Тĕрлĕ вăхăтсенче Трансиордани, Ирланди, Португали, Итали, Финлянди, Австри, Цейлон, Непал ООН членне илме ыйтса заявлени панă.

Çапла вара, 13 государство тахçантанпах Пĕрлешнĕ нацисен организацине кĕресшĕн. Вĕсене ООН членне илес ыйтăва Хăрушсăрлăх Совечĕ 1946 çултан пуçласа темиçе хутчен те сÿтсе явнă, анчах ыйтăва халиччен те татса паман-ха. Ку ыйтăва татса парас ĕçре Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсемпе Англи, çавăн пекех ытти чылай çĕршывсен США хушнине итлекен правительствисем тĕрĕс мар позици, ООН Уставне хирĕçле позици йышăннă пирки ку ыйтăва татса пама май килмен. ООН Уставĕн 4-мĕш статьинче: мире юратакан пур государствăсене те, Уставри обязательствăсене пурнăçласа пыма килĕшекен тата, организаци шутланă тăрăх, çав обязательствăсене пурнăçлама пултаракан пур государствăсене те ООН членне илме пулать, тесе уçăмлă тата ăнланмалла каланă. Анчах Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсемпе вĕсем майлă тăракан государствăсем Пĕрлешнĕ нацисен организацине çĕнĕ членсем илес ĕçре яланах Уставăн çак положенине пачах та шута илмеççĕ, вĕсем ООН-ран США правительствин тулашри агрессиллĕ политикине пурнăçлама пулăшакан хатĕр туса хума кирлине çеç асра тытаççĕ. Çавăнпа Хăрушсăрлăх Советĕнче США представителĕ, ăна Англин тата Англипе Америка блокĕнчи ытти çĕршывсен представителĕсем пулăшни çине таянса, яланах ООН членне Америка хушнисене пурнăçласа пыракан, Америкăна пăхăнса тăракан государствăсене çеç илес пирки çине тăнă. США представителĕ яланах ООН членне халăх демократи çĕршывĕсене, хăйсен никама пăхăнса тăрас мар политикине çирĕп тытса пыракан тата США правительстви хушнине туса тăма килĕшмен государствăсене илессине хирĕç; тăнă, çав государствăсене ООН членне илме чăрмантарнă. США çавăн пек позици тытса пыни США-п Хăрушсăрлăх Советĕнчи представителĕ Остин пĕррехинче тухса каланă сăмахра уççăнах палăрнă. Вăл намăса пĕлмесĕрех çапла каланă: «халăх демократи çĕршывĕсем хăйсен политикине улăштарсан кăна» США вĕсене Пĕрлешнĕ нацисен организацине илессишĕн тăма пултарать, тенĕ.

Пĕрлешнĕ нацисен организацине çĕнĕ членсем илес ыйтура США-па Англи хăйсемшĕн юрăхлă çĕршывсене кăна кăмăллас позици тытса пыраççĕ, çав вăхăтрах США-па Англи халăх демократи çĕршывĕсем—Устав тăрăх ООН членне кĕме пĕртте иккĕлентермен право пур çĕршывсем тĕлĕшпе вĕсене хисеплес мар тата нимĕн выранне те шутлас мар позици тытса пыраççĕ. США-па Англин çав позицине хирĕç Совет Союзĕ çине тăрса кĕрешсе пычĕ.

Генеральнăй Ассамблейăн тăваттăмĕшпе пиллĕкмĕш сессийĕсенче СССР Союзĕ Пĕрлешнĕ нацисен организацине çĕнĕ членсем илес çинчен тăракан ыйтусене 13 государствăн ООН членне илме ыйтса çырнă заявленийĕсене çĕнĕрен пăхса тухма хушасси çинчен сĕнÿ тăратрĕ. СССР делегацийĕ çын чухне: заявлени панă чылай государствăсене ООН членне илессине хирĕç тăма ССР Союзĕн пысăк сăлтавсем пур, анчах, çĕнĕ членсем илес ыйтăва пурте пĕрле каласса татăлса килĕшÿ тунă йĕркепе тăрăх татса пама пулăшас тесе, Совет Союзĕ ку енĕпе хирĕç тăма пăрахма пултарать, анчах ООН членĕ пулма пур енчен те тивĕçлĕ пулнă ытти çĕршывсене те хисепленесĕр тăни пулмалла мар, тенĕ.

Анчах Америкăпа Англи блокĕ çапла Устава хирĕçле, законсăр политика, халăх демократи çĕршывĕсене хирĕç тăракан политика тытса пынă. Çав блок СССР Союзĕ Пĕрлешнĕ нацисен организацине çĕнĕ членсем илес ыйтăва—пĕтĕ вăраха тăсăлнă ыйтăва татса парас тĕлĕшпе тăратнă сĕнĕве йышăнман.

Хăрушсăрлăх Советĕнче пур ыйтусене те пĕр саслă пулса решени йышăнмалли принцип пур пулсан, США-па Англи çав принципран пăрăнса иртсе кайма тăрăшаççĕ, çапла майпа вĕсем ООН членне хăйсене килĕшекен государствăсене çеç илтересшĕн. Çав шутпа паян Перу делегачĕ Политика комитетĕнче пăхса тухма Пĕрлешнĕ нацисен организацине çĕнĕ членсем илес ыйтупа резолюци проекчĕ тăратнă.

Перу делегачĕ Белаунде хăйĕн проектне хÿтĕлесе сăмах тухса каланă. Вăл çав проекта США-па Англи хушса тăнипе хатĕрленнине йышăннă, ку проекта «лайăхлатма» пулăшнăшăн США-па Англи делегацийĕсене тав тунă. Вăл пĕтĕмпех пăтраштарса пĕтерсе каланă. Вăл мĕн каланине ăнланма та çук пулнă. Хăйĕн сăмахĕнче вăл тĕрлĕ сăлтавсемпе тĕслĕхсене асăннă, законсем çинче мĕнле çырнине тата авторитетлă çынсем мĕн каланине, çав шутра евангелире мĕн çырнине те илсе кăтартнă. Вăл Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕнче пур çĕршывсем те тăмалли принципа пурнăçламалли, çав организаци Уставра лартнă требованисем тăрăх ООН членĕ пулма тивĕçлĕ государствăсене пурне те пĕрлештерсе тăмалли çинчен нумай каланă. Анчах Белаунде малалла мĕн каланинчен тата вăл хăйĕн резолюцийĕнче мĕн тума сĕннинчен çакă курăнать: ку организацие США-па Англие килĕшекен государствăсене кăна илтересшĕн; вăл мире юратакан, демократиллĕ государствăсене, хăйсен никама пăхăнса тăрас мар политикине тытса пыракан, США политики хыçĕнчен сĕтĕрĕнсе пыма килĕшмен çĕршывсене ООН членне илме чарас шутпа çĕнĕ чăрмавсем кăларса тăратать. Перу делегачĕ çав государствăсене тÿрремĕнех асăнман пулсан та, сăмах халăх демократи çĕршывĕсем—Болгари, Венгри, Румыни тата Монголи Халăх Республики çинчен пыни паллă ĕнтĕ.

Перу представителĕ мĕн тума сĕнпĕ-ха? Пĕрремĕшĕ—Генеральнăй Ассамблейăн çĕнĕ членсем илесси çинчен решени йышăннă чухне Тĕнчери çĕршывсен сучĕн «канаш парса çырнă заключени» текенскерне шута илмелле, тенĕ вăл. Çав заключенин тĕллевĕ вара заявлени панă 13 государствăран пĕр пайне кăна ООН членне илесси, чылай государствăсене унта илме чарасси пулать. Совет Союзĕ заявлени панă 13 государствăран пурне те ООН членне илме сĕнет.

Унтан Перу тăратнă резолюци проектĕнче: ООН членне илме ыйтса заявлени панă государствăн хăй мире юратнине кăтартса паракан тивĕçлĕ документсене тăратмалла, тенĕ. Мире юратнине кăтартса пама çав государствăн хăй ытти çĕршывсемпе тунă договорсене, ку государство тĕнчери çĕршывсен килĕшĕвĕсене тунă çĕре хутшăннă пулсан, унăн çав килĕшÿсене тата ытти документсене тăратас пулать.

Ку сĕнĕвĕн шухăшĕ çапла: асăннă документсенче тĕрлĕ сăлтавсем шыраса тупнипе США-па килĕшмен государствăсене ООН членне илме чарасшăн. Çавăн пек сăлтав тупнипе США-па Англи пĕр-пĕр государствăна ООН членне илтересшĕн мар пулсан, вĕсем çав государствă миршĕн тăни нимĕнрен те курăнмасть теме пултарĕççĕ.

Перу делегачĕ тăратнă резолюци проектне США-па чура пекех пăхăнса тăракан тепĕр делегаци—Колумби делегацийĕ хÿтĕленĕ. Колумби представителĕ хăй татах та маларах каясси, Генеральнăй Ассамблейăн тепĕр сессийĕнче—çиччĕмĕш сессире ятарласа сĕнÿ панипе Хăрушсăрлăх Советĕн çĕнĕ членсем илес ĕçри прависене пăрахăçлаттарма тăрăшасси çинчен каланă.

Прак представителĕ те Устава пăсма, законсăр ĕç тума чĕннĕ. Вăл Хăрушсăрлăх Советĕн пĕр-пĕр государствăна ООН членне илессипе илес сукки çинчен сĕнÿ тăратма йышăннă чухне пурте пĕрсаслă пулмалли принципа тытса пымалла мар тенĕ.

Анчах Перу делегачĕ тăратнă резолюцие хирĕç калакансем те пулнă. Чылай делегатсем çав резолюципе килĕшме сукки çинчен каланă. Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕнче пур государствăсем те тăмалли принципа чăпнипех те ĕçре пурнăçлама вăхăт çитнĕ ĕнтĕ, тесе каланă Швеци представителĕ. Вăл халиччен нумай государствăсене нимĕнле сăлтавсăрах ООН членне илменни çинчен каланă. Вăл ку ыйту çине «анлăрах тата либералла пăхма», Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕн алăкĕсене анлăрах уçса, унта çĕнĕ членсем нумайрах илме сĕннĕ. Ку ыйтăва тĕрĕс татса памалли меслет вăл—Хăрушсăрлăх Советне халиччен ООН членне илме ыйтса панă заявленисене тепĕр хут пăхса тухма сĕнни пулать, тенĕ вăл.

Сири делегачĕ Эль Хури татах та уçăмлăрах каланă. Вăл ООН членне илме ыйтса заявлени панă государствăсене пĕр тăхтаса тăмасăрах унта илес пирки çине тăнă. США-па Англи халĕ Италие тата ытти 8 государствăна ООН членне илтерес пирки çине тăраççĕ. Анчах вĕсем çав икĕ аслă держава айăпĕпе кăна ку организаци членĕнче тăмаççĕ, вĕсем тепĕр пилĕк государствăпа—Венгрие, Болгарие, Албание, Румыние тата Монголи Халăх Республикине ООН членне илессине хирĕç тăраççĕ, çавăн пирки ытти 9 государствăна члена илес ĕç те чарăнса тăрать. Мĕншĕн-ха вара халĕ асăннă пилĕк государствăна члена илмелле мар, çавна пула ытти тăхăр государствăна хăйсен ыйтăвĕсене тивĕçтерессине тахçантанпах кĕттерсе тăма чарăпас мар?—тесе ыйтнă Эль Хури.

Эль Хури хĕвеланăçĕнчи державăсем асăннă пилĕк государствăна ООН членне илессине хирĕç кăларса тăратнă сăлтавсем пачах тĕрĕс мар пулнине кăтартса панă.

Сири делегачĕ хăй Перу тăратнă сĕнÿне—ООН членне кĕме шут тытнă государствăсен хăйсем мире юратнипе кăтартма темĕнле документсем тăратмалла тесе сĕннипе килĕшменни, çав государствăсенчен вĕсем мире юратнипе юратманни çинчен ООН-ра мĕнле те пулин тĕпчесе ыйтассипе хирĕç пулни çинчен каланă. Мĕнле-ха вара государствăсенчен тĕпчесе ыйтмалла? Хăйне хисеплекен мĕнле государство вара унтан судра тĕпченĕ пек тĕпчесе ыйтнипе килĕшме пултартăр»,—тенĕ вăл.

Эль Хури юлашкинчен: ООН членне илме ыйтса заявлени панă государствăсене пурне те организацие илни ку ыйту тăрăх чăннипех те пĕртен-пĕр тĕрĕс тата Устава калана пек решени йышăнни пулĕччĕ, тенĕ.

Унтан Перу делегачĕ кĕске сăмах тухса каланă. Вăл Сири делегачĕ каланине сирсе яма хытă тăрăшнă. Кун хыççăн лару хупăннă.

Ку ыйтăва январĕн 21-мĕшĕнчи кăнтăрлахи ларура малалла сÿтсе явма палăртнă.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, январĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕн паянхи пĕлтерĕвĕнче çапла каланă: Халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсемпе пĕрле пур фронтсенче те тăшмана хирĕç оборонăра тăрса çапăçаççĕ.

Вăтаçĕрти фронтра тăшман ĕнер икĕ хутчен Халăх çарĕн чаçĕсем тăракан позицисем çине тапăнса атакăсем тунă. Тăшман атакисене сире-сире янă, унăн вăйĕсене чылай пĕтернĕ.

Январĕн 19-мĕшĕнче Халăх çарĕн чаçĕсем хĕвеланăçĕнчи çыран çывăхĕнче тăшманăн пĕр çар карапне шыва путарнă, унччен çав карап çыран тăрăхĕнчи районсем çине тупăсемпе пеме хăтланнă.

Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тата самолетсене хирĕç çапăçакан салтакĕсем паян тăшманăн 3 самолетне персе ÿкернĕ, çав самолетсем унччен, ытти самолетсемпе пĕрле, хĕвелтухăçĕнчи çыран районĕсенчи мирлĕ халăх çине бомбăсем пăрахнă пулнă.

Америка самолечĕсем Корейăпа Китай делегацийĕсен автомашинисен колоннине тапăннă

ПЕКИН, январĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин спецкорĕ Кэсонран çапла пĕлтерет:

Ĕнер Америка самолечĕсем Корейăпа Китай делегацийĕн автомашинисем çине бомбăсем пăрахнă тата пулеметсемпе пенĕ. Килĕшĕве çакăн пек тепĕр хут пăсни пирĕн делегаци Америка самолечĕсем январĕн 17-мĕшĕнче Кэсонри çар кĕме юраман вырăна бомбăсем пăрахнине хирĕç протестленĕ хыççăн тепĕр куннех пулнă.

Январĕн 18-мĕшĕнче 16 сехет те 40 минутра, Ханьпокио кĕперĕ çывăхĕнче, Америка самолечĕсем Корейăпа Китай делегацийĕсен Пхеньянран Кэсона пыракан автомашинисен колоннине тапăннă, çав колоннăра виçĕ автомашина пулнă. Пĕр-пĕринпе каласса тунă килĕшÿ тăрăх, çав транспорт колонни Пхеньянран ирхине 6 сехетре тухнă, кашни автомашина çине хĕрлĕ хăмач витнĕ пулнă, малти машина çинче хĕрлĕ ялав вĕлкĕшсе пынă. Америкăн реактивлă самолечĕсем çак колоннăна асăрхасан, ун çинчен темиçе хутчен те вĕçсе иртсе, пулеметсемпе тата ракетăсемпе пенĕ. Унтан вĕсем малта пыракан автомашина çине бомба пăрахнă, Корейăпа Китай делегацийĕнчи икĕ çын аманнă.

Англи империалисчĕсен Египетри агрессиллĕ ĕçĕсем

КАИР, январĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). «Аль-Ахрам» тата «Аль-Мысри» хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, январĕн 15-мĕшĕнче Англи çарĕн чаçĕсем Тель эль-Кабира пырса кĕме виççĕмĕш хут тапăннă, вĕсем хула çине тупăсемпе пенĕ, темиçе çурта аркатнă. Хула халăхĕ, партизансем тата полици Англи çар чаçĕсене хирĕç хытă кĕрешнĕ, вĕсене каялла чакарнă.

«Аль-Ахрам» хаçат корреспонденчĕ Загазиг хулинчен çакăн çинчен пĕлтерет: Абу-Хаммад тата Тель эль-Кабир çывăхне Англи çарĕсем парашютистсем антарнă. Парашютистсем ăнна района халăх, партизансем тата полици хупăрласа илнĕ, 80 парашютиста тытнă, вĕсене хĕçпăшалĕсемпе пĕрлех тыткăна илнĕ.

«Аль-Ахрам» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Англи çарĕсем январĕн 15-мĕшĕнче Исмаили хулине хупăрласа илнĕ, ăна Египетăн ытти пайĕсенчен пĕтĕмпех уйăрнă тата Каир хулипе Суэц хули хушшинчи çула пÿлсе лартнă.

Египет правительстви Англи правительствине нота панă

КАИР, январĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Январĕн 19-мĕшĕнче Египет ют çĕршыв ĕçĕсен министерстви Англин Каирти посольствине нота ярса панă. Нотăра Англи çарĕсем Суэц каналĕ патĕнчи вырăнта Египетăн чылай патриочĕсене хупса лартни çинчен каланă. Англи çарĕсем пуринчен ытла Англие хирĕç тăрас юхăма хутшăннă çынсене тытса хупнă, вĕсенчен хăшпĕрне Англи салтакĕсемпе Египет çыннисем хушшинче пулса иртнĕ хĕçпăшаллă çапăçусем вăхăтĕнче арестленĕ, вĕсенчен чылайăшĕ—çав çапăçусене пачах та хутшăнман çынсем. Англи çарĕсем тытса хупнă çынсене çав тери хытă асаплантараççĕ, фашистсен концентраци лагерĕсенче те çынсене çавăн пек асаплантарман, тенĕ нотăра.

Египет правительстви çакăнта хускатнă ыйту çине тĕплĕн ăнлантарса ответ парассине кĕтет, Египет çыннисене çавăн пек асаплантарнине хирĕç хытă протестлет, тенĕ нотăра.

Корреспондентсен районти канашлăвĕ

ОКТЯБРЬСКИ. (Телефонпа). Кунта ялти корреспондентсен тата стена хаçат редакторĕсен районти канашлăвĕ пулса иртрĕ.

Канашлу ВКП(б) обкомĕн VIII-мĕш пленумĕ йышăннă решенисене пурнăçлас тĕлĕшпе агитаторсем, корреспондентсем тата стена хаçачĕсем умĕнче тăракан задачăсем çинчен ВКП(б) райком секретарĕ П. Петров юлташ тунă доклада сÿтсе яврĕ.

Доклад тăрăх 17 çын тухса каларĕ. Вĕсенчен нумайăшĕ çитес çуракине хатĕрленес, вăрман хатĕрлемелли, укçа-тенкĕ пухмалли плансене тултарас тата хуçалăхпа политикăллă ытти задачăсене пурнăçлас тĕлĕшпе вырăнта ĕçсем мĕнле тăни çинчен каларĕç. Стена хаçат редакторĕсем обком пленумĕн решенийĕсене пурнăçлассишĕн активлă кĕрешнине палăртрĕç.

Стена хаçат редакторĕ Андреев юлташ «Культура» колхозри «Стахановец» хаçатăн паха опычĕпе паллаштарчĕ, колхозсенчи стена хаçачĕсене ертсе пырас ĕçри пысăк ҫитменлĕхсене тĕплĕ палăртрĕ. Вырăнти хăшпĕр пуçламăш парторганизацисем, çавăн пекех районти «Хĕрлĕ ялав» хаçат стена хаçачĕсене кирлĕ пек пулăшса пымаççĕ, паха опыта сармаççĕ. Ялти корреспондентсене воспитани парас, вĕсене вĕрентсе ÿстерес ĕçре те пысăк ҫитменлĕхсем пур.

Канашлура пулнă агитаторсем, ялти корреспондентсем, стена хаçат редакторĕсем, ВКП(б) обкомĕн VIII-мĕш пленумĕ йышăннă решенисене хăйсен ĕç программи вырăнне хурса, çав решенисене пурнăçлассишĕн большевикла кĕрешме хавхалантаракан ĕçсем тума палăртрĕç.

В. СЕМЕНОВ.

Колхозсенчи радиоузелсем

КОМСОМОЛЬСКИ. Ĕçсынни депутачĕсен район Совечĕ иртнĕ 1951 çулта районти колхозсене радиофикацилес тĕлĕшпе ятарласа план туса çирĕплетрĕ. Плана пурнăçласа, пĕрлешсе пысăкланнă Жданов ячĕпе тăракан тата «Гигант» колхозсенче радиоузелсем тунă. Радиоузелсем ĕçleme тытăнчĕç.

Колхозниксем Мускавран тата Шупашкартан паракан передачăсене савăнса итлеççĕ. Жданов ячĕпе тăракан колхозра халлĕхе 120 киле радио кĕртнĕ. Çывăх кунсенче 600 килте радио калаçма тытăнать. Çавăн пекех «Гигант» колхозра 228 килте радио калаçать.

Кăçал районти колхозсенчи радиоузелсен хисепĕ тата ÿсмелле. Ульянов ячĕпе тăракан, «Красная звезда», Молотов ячĕпе тăракан, «Заветы Ильича», «Светлая жизнь», «Гвардеец», «Красный борец» колхозсенче радиоузелсем тумалла.

Н. КВАСОВ.
А. ЕРЕМЕЕВ.

Çу тата казеин тăвакан завод

МУРКАШ. Район центрĕнче çак кунсенче çу тата казеин тăвакан завод туса пĕтерсе ĕçе ячĕç. Заводра сĕт илмелли, казеин тумалли, хăйма усрамалли тата сепараторнăй цехсем пур.

Заводри ĕçсене пĕтĕмпех механизацилеççĕ. Заводăн хăйĕн электростанци пулать.

Район центрĕ çĕнĕ çуртсемпе илемленсех пырать. Çĕнĕ çул тĕлне кунта ача-сен ясли çуртне, автомашинăсем валли гараж, промкомбинат валли тимĕр-тăмăр цехĕ, МТС валли пысăк гараж тата унти работниксем валли 7 хваттерлĕ çурт туса пĕтернĕ.

И. КОСТИН.

Вăрмар районĕнче

Н. В. Гоголь вилнĕренпе 100 çул çитес умĕн. Районти ĕçсыннисем вырăссен аслă писателĕ Н. В. Гоголь вилнĕренпе 100 çул çитнине паллă тума хатĕрленеççĕ.

Политикăллă тата наукăллă пĕлÿсем саракан Пĕтĕм Союзри обществăн районти уйрăмĕ Гоголь творчестви çинчен докладсемпе лекцисем иртерет. Район центрĕнчи, çавăн пекех ялсенчи библиотекăсенче Гоголь произведенийĕсен тата ун çинчен çырнă произведенисен выставкисене йĕркеленĕ. Çак кунсенче районти библиотекăра Гогольăн «Ревизор» комедийĕ тăрăх вулакансен конференцине ирттереççĕ. Вăрмарпа Кавалти вăтам шкулсенчи, Тикешри, Кив Вăрмарти, Мăн Çырмари çичĕ çул вĕренмелли шкулсенчи вĕренекенсемпе учительсем Гоголь комедийĕсене сцена çинче лартма хатĕрленеççĕ.

Когиз магазинĕ январь уйăхĕнче кăна Гоголь произведенийĕсемпе унăн портречĕсене 5 пин тенкĕлĕх сутнă.

Фермăсене механизацилеççĕ. «Хĕрлĕ Кĕтне» колхоз обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли виçĕ çуллăх плана пур енĕпе те ирттерсе тултарнă. Выльăх-чĕрлĕх ăшă та çутă витесенче хĕл касать, вĕсем валли апат çителĕклĕ.

Фермăра ĕнесене электричество вăйĕпе сăваççĕ, сурăх çăмне те электромашинкăпа илеççĕ. Юлашки икĕ çул хушшинче колхоз тымарçимĕççем çуса туракан, утă улăм, силос туракан машинăсем туяннă, кормокухня тунă. Кăçал фермăсене водопровод тăрăх шыв пыма пуçлать, вара витесенче автопоилкăсем лартаççĕ.

Ача ашшĕ-амăшĕсен лекторийĕ. Кив Вăрмарти çичĕ çул вĕренмелли шкулта ача ашшĕ-амăшĕсем валли лектори организациленĕ. Лектори план тăрăх ĕçлет. Вĕренÿ çулĕ пуçланнăранпа ача ашшĕ-амăшĕсене «Çемье тата шкул», «Ача ашшĕ-амăшĕсем хăйсен примĕрĕпе ачасене воспитани парасси», «Ача ашшĕ-амăшĕсен авторитечĕ» темăсем тăрăх лекцисем вуласа панă. Лекци итлеме 150—200 çын çÿреççĕ.

Колхозсен пайланман фончĕсем ÿсеççĕ. Районти колхозсем тырă, техникăллă культурăсемпе нумай çул ÿсекен курăк вăррисем сутса тата выльăх-чĕрлĕхрен пилĕк миллион тенкĕ ытла тупăш илчĕç. Тупăш ÿсе пынă май, артельсен обществăллă пурлăхĕсем те хутшăнса пыраççĕ. Иртнĕ çул колхозсенче 17 выльăх-чĕрлĕх вити, 15 складпа амбар, вуншар пĕвесемпе кÿлĕсем тунă, ялхуçалăх машинисем чылай туяннă. Икĕ колхоз çĕнĕ автомашинăсем илнĕ. Фермăсенчи выльăх-чĕрлĕх йышĕ те нумай хутшăннă.

И. ВОЛКОВ,
(Хамăр корр.).

Спорт хыпарĕсем

Шупашкарти хоккей командисен ăмăртăвĕ. Январĕн 20-мĕшĕнче «Молния» спорт обществи стадионĕнче хоккей вăййипе Шупашкар хулинче мала тухассишĕн малтанхи вăйăсем пулчĕç. Чи малтан «Динамо» спорт обществи хоккеисчĕсем «Спартак» спорт обществин 2-мĕш хоккей командипе тĕл пулса вылярĕç. Вăйăра динамовецсем 3:0 шутпа çĕнтерчĕç.

«Искра» тата «Пищевик» спорт обществисен хоккей командисем хушшинчи вăйăра «Пищевик» спортсменĕсем 4:0 шутпа выляса ячĕç.

Юлашкинчен «Спартак» спорт обществин 1-мĕш командипе «Молния» спорт обществи хоккеисчĕсем тĕл пулса вылярĕç. Вăйă 3:3 шутпа пĕтрĕ.

Ялсенчи йĕлтĕрçĕсемпа конькипе ярăнакансен республикăри ăмăртăвĕсем. Январĕн 20-мĕшĕнче Шупашкарта, Учительсен канмалли çурчĕ патĕнче, ялсенчи йĕлтĕрçĕсен республикăри ăмăртăвĕ пуçланчĕ. Арçынсем 18 километр, хĕрарăмсем—5 километр ăмăртса ярăнчĕç.

Малтанхи кун çавăн пекех йĕлтĕрçĕсен слалом меслечĕпе ярăнмалли ăмăртăвĕсем пулчĕç.

Ĕнер йĕлтĕрçĕсем 10 тата 30 километр ăмăртса ярăнчĕç. «Молния» спорт обществи стадионĕнче конькипе ярăпакансен ăмăртăвĕ пулчĕ.

Профсоюзпа комсомол кросĕ умĕн. Январĕн 23-мĕшĕнче пирĕн çĕршыври хуласемпе ялсенче профсоюзпа комсомолăн йĕлтĕрпе ярăнмалли кросĕ пуçланать. Иртнĕ вырсарникун, çак кроса хатĕрленнĕ май, Шупашкарти çĕршер физкультурниксемпе физкультурницăсем Атăл леш енне, Учительсен кану çурчĕ патне, тренировкăна тухрĕç. «Искра» спорт обществинчен уйрăмах тренировкăна нумай хутшăнчĕç.

Ответлă редактор **М. К. КОСТИН.**

„Чăваш Коммуни“

хаçата çĕнĕ çултан пуçласа çырăнса илме ĕлкĕреймен юлташсем февральтен пуçласа çырăнса илме пултараççĕ.

Хаçат хакĕ:
Çулталăка—60 тенкĕ
6 уйăха—30 тенкĕ
3 уйăха—15 тенкĕ
1 уйăха— 5 тенкĕ

Подписка укçине çыхăну кантурĕсенче е почтальонсемпе письмоносецсем илеççĕ.

«Чăваш Коммуни» хаçат редакцийĕ.

Пĕтĕм тĕнчери демократиллĕ çамрăксен федерацийĕн исполком сессийĕ уçăлнă

КОПЕНГАГЕН, январĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Копенгаген хулинче Пĕтĕм тĕнчери демократиллĕ çамрăксен федерацийĕн исполком сессийĕ уçăлнă.

Сесси кун йĕркинче виçĕ ыйту тăрать: çамрăксен прависене хÿтĕлес ыйтупа пĕтĕм тĕнчери конференци ирттересси çинчен; Англири тата Францири çамрăксен организацийĕсем мире сыхласа хăварас тĕлĕшпе ĕçленин опычĕ çинчен, пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн решенийĕсем тата культурăллă çыхăнусем организацилес ĕçе çамрăксем хутшăнасси.

Кун йĕркинчи пĕрремĕш ыйтупа Пĕтĕм тĕнчери демократиллĕ çамрăксен федерацийĕн генеральнăй секретарĕ Жак Дени доклад тунă.

АМЕРИКĂН ОККУПАЦИ ВЛАÇĔСЕМ ÇАР ПРЕСТУПНИКĔСЕНЕ ИРĔКЕ КĂЛАРАÇÇĔ

ШАНХАЙ, январĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Токиори радио пĕлтернинчен çакă паллă пулнă: Риджуэй штабĕ Америкăн оккупаци влаçĕсем январĕн 25-мĕшĕнче Японин 22 çар преступникне Сугамо тĕрминчен срокчен кăлармалла туни çинчен пĕлтернĕ.

Индири суйлавсем

БОМБЕЙ, январĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Хайдерабадри халăх демократи фрончĕн председателĕ Джайсурья Инди парламенчĕн суйлавĕ вăхăтĕнче ытти партисен кандидачĕсене çĕнтернĕ. Вăл 90.366 сасă илнĕ. Çав вăхăтрах Индин нациллĕ конгресĕ текен партин кандидачĕ Шринивас 70.866 сасă илнĕ.

Траванкор-Кочин штатĕнче суйлав вĕçленнĕ. Суйлав результачĕсем çапла: Инди парламентне Индин наци конгресĕ текен партирен 6 кандидат, коммунистсен партийĕ ертсе пыракан сулахайри партисен пĕрлешнĕ фронтĕнчен—4 кандидат, никама пăхăнса тăманнисенчен (сулахайри партисен пĕрлешнĕ фрончĕ пулăшнипе)—1 кандидат тата ытти партисенчен 1 кандидат суйланнă. Кунта парламента суйлама Индири социалистсен партийĕ 9 кандидат тăратнă пулнă, вĕсем пĕри те суйланман.

Траванкор-Кочин штатĕнчи законсем кăларакан пухăва Индин наци конгресĕ текен партирен 44 кандидат, коммунистсен партийĕ ертсе пыракан сулахайри партисен пĕрлешнĕ фротĕнчен—37, никама пăхăнманнисенчен—6, социалистсен партийĕнчен—12 тата ытти партисенчен 9 кандидат суйланнă.

Францин çĕнĕ правительстви

ПАРИЖ, январĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем Францин çĕнĕ правительствине кĕнĕ çынсен списокне пичетленĕ. Правительствăна çаксем кĕнĕ: министрсен совечĕн председателĕ тата финанс министрĕ—Эдгар Фор (радикал), министрсен совечĕн вице-председателĕ тата портфельсĕр министр—Анри Кэй (радикал), министрсен совечĕн вице-председателĕ тата наци оборони министрĕ — Жорж Бидо (МРП—«халăхăн республикăшăн тăракан юхăмĕ» текен парти), ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ—Робер Шуман (МРП), шалти ĕçсен министрĕ—Шарли Брюн (радикал), хĕçпăшалсен министрĕ — Морис Буржес-Монури (радикал) тата ыттисем те.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: ответлă редактор—0-67, ответлă редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—4-17, ялхуçалăх пайĕ—3-97, пропаганда пайĕ—8-61, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 00603 Типография № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.